# Çĕнĕ çулпа саламлатпăр!

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм йăш*

ХЫПАР
1997 çулхи январĕн
30-мĕшĕнче тухма пуçланă

ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

52(922) №,
2015,
раштав/декабрь,
31
Хакĕ ирĕклĕ.
16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

## Уяв ячĕпе!

**Хаклă ентешĕмсем!**

*Сире Çĕнĕ 2016 çул тата çутă Раштав уявĕ ячĕпе пĕтĕм чунтан саламлатăп!*

Вĕçленекен çулталăк ансат мар, çапах питĕ интереслĕ, тĕрлĕ пулăмпа пуян пулчĕ.

14 çуллăх тăхтав хыççăн Чăваш Енре пирвайхи хут республика Пуçлăхĕн пĕтĕм халăх суйлавĕ пулчĕ. Вăл уçă та тĕрĕс иртрĕ. Эпĕ мана шаннисене пурне те чĕререн тав тăватăп.

Пирĕн ума тухса тăнă йывăрлăхсем пире ăслăрах, вăйлăрах тата çирĕпрех пулма пулăшрĕç, республикăна аталантарас енĕпе çĕнĕ хăват пачĕç. Эпир ăнасса никамах та шанман проектсене пурнăçлама пултартăмăр. Çĕр фельдшерпа акушер пункчĕн строительствин пысăк та пĕлтерĕшлĕ программине вĕçлерĕмĕр. Республикăра ача сачĕллĕ тата стадионлă çĕнĕ микрорайонсем çĕкленчĕç, çĕнĕ производствăсем уçрăмăр, пысăк технологиллĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелерĕмĕр.

Пурнăçланă ĕçе кура нумай çул пурăнакансен шучĕ – 18, нумай ачаллă çемьесен йышĕ 25% ӳсрĕ, пурнăç тăршшĕ 2,5 çул хушăнчĕ.

Пирĕн ăнăçусене чи çӳллĕ шайра пĕрре кăна мар палăртнă. Чăваш Республики Раççейĕн инновацисене вăйлă аталантаракан пилĕк регионĕн йышне кĕчĕ. Инвестици климачĕн наци рейтингĕнче Чăваш Ен регионсен хушшинчи бизнес валли хăтлă условисем йĕркеленĕ лидерсен малти теçеткинче.

Пирĕн республика Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй рейтингĕнче ачасен пурнăçĕ тĕлĕшпе чи ырă 10 регион шутне тăнă.

2015 çулта Чăваш Ен çĕршывăн спорт центрĕн статусне çирĕплетрĕ. Эпир чăваш çĕрĕ çинче ирттернĕ Европăри командăсен чемпионатне çăмăл атлетсен Раççейри 2015 çулхи чи лайăх спорт пулăмĕ тесе хакланă.

Хаклă туссем! Экономикăшăн ансат мар вăхăтра та эпир инновацие тĕпе хуракан производствăсем уçатпăр, пурăнмалли çурт-йĕр, больницăсемпе поликлиникăсем, клубсем, шкулсемпе ача сачĕсем çĕклетпĕр. Пĕрле эпир курăмлă çитĕнӳсем тума пултарасси пирки иккĕленместĕп! Пирĕн пĕрлĕх – пархатарлă та хăватлă вăй!

2016 çула Чăваш Енре Ĕç çыннин çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ. Пирĕн тĕллев – пурне те, чи малтанах çитĕнекен ăрăва çитĕнӳсене тата хисепе тӳрĕ кăмăллă ĕçпе çеç çĕнсе илме май пуррине ăнлантарасси!

Çĕнĕ çулта пурне те ăнăçу, çирĕп сывлăх тата телей сунатăп! Пурне те – уяв ячĕпе! Çĕнĕ 2016 çул ячĕпе!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил ИГНАТЬЕВ.**

* * *

**Хаклă ентешсем!**

*Сире çывхарса килекен 2016 çул ячĕпе саламлатăп!*

Авалтанпах Çĕнĕ çул уявĕ кашни çыншăн – малашлăхăн уçă алăкĕ пек. Çутă ĕмĕтсем пурнăçа кĕрессипе çыхăннă шанăç çак кунсенче çĕкленӳллĕ кăмăл кӳрет, хăюллă плансем палăртма май парать.

Истори черетлĕ çаврăм турĕ. Вĕçленекен çулталăка ăсатнă май эпир ырă кăмăл-туйăмпа тата паллă пулăмсемпе пуян малашлăх пуласса шанатпăр. Ыранхи кун ырă хыпарсем кӳтĕр тесе килĕштерсе, пĕр-пĕрне хисеплесе тата пулăшса пурăнмалла – Чăваш Енре тĕрлĕ халăх, тĕн, культура çыннисем авалтанпах çапла пурăннă.

Сире, хаклă ентешĕмсем, сывлăх, çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм, палăртнă тĕллевсене ăнăçлă пурнăçлама, савăнăç, ырлăх, телей тата юрату сунатăп!

**Федераци Канашĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ Николай ФЕДОРОВ.**

* * *

**Чăваш Енĕн хисеплĕ çыннисем!**

Сире тата çывăх çыннăрсене Çĕнĕ çулпа тата Раштавпа саламлатăп! Килекен çулталăк Сирĕншĕн ăнăçлă та тухăçлă, çĕнĕ майсемпе çитĕнӳсен çулĕ пултăр. Сире ырлăх, тăнăçлăх, иксĕлми вăй-хăват, çутă ĕмĕтĕрсене пурнăçлама сунатăп. Палăртнă тĕллевĕрсем тӳрре тухчăр.

**Раççей Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил БАБИЧ.**

* * *

Календарĕн юлашки страницине хупмалли, паллă пулăмсене, тунă çитĕнӳсене аса илмелли, малашлăха илсе каякан çулсене тепĕр хут хакламалли вăхăт çитрĕ. Яваплăха туйса çакна палăртасшăн: эпир тăрăшса ĕçленĕрен пире нимĕнле кризис та ура хураймĕ. Çĕнĕ йышши сывлăх сыхлавĕ, паха вĕрентӳ тата ытти нумай тĕллев пĕр тĕвве çыхăнса пурнăça кĕрсе пычĕç: ФАПсем, спорт комплексĕсем, шкулсем, культура учрежденийĕсем çĕкленсе хута кайрĕç. Ытти сферăпа отрасльти кăтартусем те малашлăха пăхма шанăç кӳреççĕ.

Тăван республикăмăрти халăха Çĕнĕ çулпа тата Раштавпа чун-чĕререн саламлатăп. Çирĕп сывлăх, ăнăçупа ăнтăлу, вăй-хăват, тăнăçлăх сунатăп.

**Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий ПОПОВ.**



## Хĕл Мучине чупса пырсах ыталаççĕ

### Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 31.12 | – 13 | – 16 |
| 01.01 | – 17 | –20 |
| 02.01 | – 17 | –22 |
| 03.01 | – 17 | – 13 |
| 04.01 | – 13 | – 19 |
| 05.01 | – 16 | – 18 |
| 06.01 | – 12 | – 7 |

**Эсир Шупашкар кӳлмекĕнчи Хĕл Мучи резиденцийĕнче пулнă-и? Унта унăн сухалĕнчен туртса пăхма та пулать. Тата çакăнти арча çине ларса ĕмĕтленни пурнăçланнине ачасем те, аслисем те ĕненеççĕ. Иртнĕ çул пĕр каччă, тĕслĕхрен, хваттер те, çăмăл машина та илме пултарнă. Çак асамлăх çитес çул лайăхрах вĕренме те пулăшать теççĕ.**

**«Парне илекен ачипе пĕрле ашшĕ-амăшĕ те хĕпĕртенине сăнама мĕнешкел кăмăллă», – тет Хĕл Мучи. Пĕри унран хăрать, тепри чупса пырсах ыталать. Çĕнĕ çул юрри-сăввине итлесе тăранма çук. Акă вăл – юмах тĕнчи.**

**Республикăн тĕп хулине тĕрлĕ районтан хăнана килекен ача-пăча та хаваспах кĕрсе тухать ку çурта. Кайран çак саманта çулталăк тăршшĕпех аса илеççĕ вĕсем.**

**Юмах сăнарĕсемпе паллашма та май килчĕ. Чăваш патшалăх культурăпа искусствăсен институчĕн студенчĕсем тĕрлĕ ӳсĕмрисене ăшă кăмăл парнелеççĕ. Мĕнешкел савăнăçлă вĕсемпе пĕрле!**

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Автор сăнӳкерчĕкĕ.

СЪЕЗД

# Пысăк йышпа ĕçлеме çăмăлрах



Иртнĕ эрнере Шупашкар районĕнчи «Волжские зори» санаторире ЧР Журналистсен союзĕн XVIII съезчĕ иртрĕ.

Чи малтанах Валерий Комиссаров председатель организацин 2010-2015 çулсенчи ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Çак тапхăрта пĕрлĕх республика министерствисемпе, ведомствисемпе пĕрле 20 ытла семинарпа пресс-конференци йĕркеленĕ. Валерий Петрович кадрсен ăсталăхне ÿстерессипе, союз йышне пысăклатассипе, студентсен редакцисене практикăна килессипе çыхăннă ыйтусем çинче чарăнса тăчĕ. Çавнашкалах ытти регионти ĕçтешсемпе тăтăшрах тĕлпулмалли çинчен каларĕ вăл. Малтанхи туслăха çирĕплетсе пымаллине палăртрĕ.

ЧР информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ Александр Иванов пуханнисене республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ячĕпе саламларĕ. Чăваш кĕнеке издательстви тăван чĕлхепе кĕнеке сахал мар пичетленине палăртрĕ вăл. Çитес çулта та укça çителĕклех уйăрĕç. Çав вăхăтрах ачасенчен чылайăшĕ чăвашла калаçманни-вуламанни, паллах, пăшăрхантарать. Пирĕн çине тăрсах чăваш чĕлхине, культурине, йăли-йĕркине упраса хăварас тĕллевпе акцисем йĕркелемелле.

ЧР Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсен комитечĕн председателĕ Петр Краснов чăваш чĕлхин орфографийĕпе пунктуаци правилисене йĕркене кĕртмелли çинчен каларĕ. Чиновниксем ку енĕпе ĕçлеççĕ.

“Хыпар” Издательство çурчĕн директорĕ – тĕп редакторĕ Михаил Арланов чăваш наци хаçачĕ кăрлачра 110 çул тултарассине, уява пуш уйăхĕнче паллă тăвассине пĕлтерчĕ.

Сăмах ăстисем ĕçри çитĕнÿшĕн наградăна тивĕçрĕç. Çак йышра “Хыпар” Издательство çурчĕн корреспонденчĕсем те пур. **Лариса Никитина** /“Хресчен сасси”/ – РФ Журналистсен союзĕн, **Татьяна Наумова** – ЧР Журналистсен союзĕн, **Марина Тумаланова** ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп хучĕсене тивĕçрĕç.

Съезд делегачĕсем союза ертсе пымашкăн Валерий Комиссаровах суйларĕç.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

ТАВ ТĂВАТПĂР

# Пĕрлех пуласчĕ

Редакцие сиртен куллен тенĕ пек çыру килет. «Чăваш хĕрарăмне» юратса вуланине пĕлтеретĕр эсир, вырăнти лару-тăрупа паллаштаратăр, сĕнÿ-канаш паратăр, хăвăра хумхантаракан ыйтусен хуравне тупма, вĕсене пĕрле сÿтсе явма ыйтатăр. Çак туслă çыхăну малашне те ан таталтăрччĕ.

Çулталăк вĕçленнĕ май кăçал пирĕнпе пулнă авторсене чунран тав тăватпăр. Çирĕп çыхăну йĕркеленĕ яланхи тантăшăмăрсем: Георгий Тусли /Красноармейски районĕ/, Анатолий Пукаш /Сĕнтĕрвăрри районĕ/, Александр Вишневский /Шупашкар хули/, Галина Зотова /Хĕрлĕ Чутай районĕ/, Роза Петрова-Ахтимирова /Шупашкар хули/, Юрий Корнилов /Элĕк районĕ/, Петр Сидоров /Шупашкар хули/, Иван Ерофеев /Патăрьел районĕ/, Виталий Ачча /Канаш районĕ/, Зинаида Свеклова /Шăмăршă районĕ/, Геннадий Савельев /Элĕк районĕ/, Лилия Егорова /Шупашкар хули/ – хальхинче те çыру хыççăн çыру вĕçтерчĕç.

Хăнăхнă йăлапа Левтина Марье, Лидия Сарине, Валентина Тарават, Светлана Асамат, Зоя Сывлăмпи, Анатолий Юман, Маргарита Прокопьева, Вячеслав Михайлов, Николай Васмат, Анатолий Хмыт, Роза Шевлепи, Лидия Ковалюк, Иван Тенюшев, Любовь Лĕпĕшпи, Геннадий Юмарт, Николай Агаков та хăйсен хайлавĕсемпе савăнтарчĕç. Владимир Кузьмин, Василий Кошкин-Кервен, Юлия Силэм, Валери Туркай, Любовь Мартьянова, Герман Желтухин, Геронтий Никифоров, Виталий Станьял та сăвă-калавĕпе, шухăшĕпе паллаштарчĕç.

Хастар та пултаруллă вулакансемпе Елена Соборовăпа, Петрпа Зинаида Мазуркинсемпе, Василий Савинкинпа, Мария Ермолаевăпа, Галина Çавалпа, Галина Макаровăпа, Вячеслав Кругловпа, Алексей Суварпа, Надежда Шандимировăпа пĕрлех Валентина Христофорова /Вăрмар районĕ/, Вячеслав Михайлов /Элĕк районĕ/, Лина Макарова /Шупашкар районĕ/, Анатолий Васильев /Элĕк районĕ/, Любовь Александрова /Шупашкар хули/, Зоя Разумова /Вăрмар районĕ/, Роза Калмыкова /Элĕк районĕ/, Ксения Михайлова /Шупашкар районĕ/, Евгения Иванова /Сĕнтĕрвăрри районĕ/, Р.Леонтьева /Шупашкар хули/, Галина Кириллова, Илья Яковлев /Муркаш районĕ/, Игорь Майков /Муркаш районĕ/, Людмила Тумаланова /Йĕпреç районĕ/, Мария Мамуткина /Йĕпреç районĕ/, Галина Матвеева /Вăрмар районĕ/, Людмила Именова /Етĕрне районĕ/, Петр Семенов, Альберт Кольцов /Сĕнтĕрвăрри районĕ/, Михаил Игнатьев /Шупашкар районĕ/, Глафира Ильина /Красноармейски районĕ/, Любовь Трофимова, Елена Иванова /Вăрмар районĕ/, Виталий Никонов /Шупашкар хули/, Елена Никитина /Муркаш районĕ/, Альбина Михайлова, Нина Павлова, Алина Светлова, Екатерина Григорьева /Шупашкар районĕ/, Альберт Аниш, Николай Ершов /Красноармейски районĕ/ хаçатпа çыхăну йĕркелерĕç.

Аякри йăхташăмăрсен пурнăçĕ çинчен Зоя Васильева /Кемĕр облаçĕ/, Елена Лянкина /Ульяновск облаçĕ/, Светлана Садыкова /Тутарстан/, Елена Мустаева /Ульяновск облаçĕ/, Ирина Михайлова /Пушкăртстан/ çырса пĕлтерчĕç.

Оксана Ястребова /Тăвай район прокурорĕ/, Людмила Лукина /Раççей МЧСĕн Чăваш Енри тĕп управленийĕн ĕçченĕ/, Надежда Васильева /Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн ĕçченĕ/, Людмила Бусова /Шупашкарти Ленин районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи/, Андрей Козлов /РФ ШĔМĕн Канашри уйрăмĕн пуçлăхĕн заместителĕ/, А.Шарин /РФ СК ЧР управленийĕн Шупашкарти Ленин районĕнчи уйрăмĕн ертÿçи/, Ю.Краснова /Шупашкарти Мускав районĕн следстви уйрăмĕн ĕçченĕ/, Инна Егорова /Шупашкарти Ленин районĕн следстви уйрăмĕн ĕçченĕ/, Н. Петрова /Шупашкарти Мускав районĕн следстви уйрăмĕн ĕçченĕ/, Э.Столярова /Шупашкарти Ленин районĕн прокурорĕн заместителĕ/ хăйсен тытăмĕнчи хыпарсемпе паллаштарчĕç.

Владислав Платоновпа /Шупашкар районĕ/ Николай Краснов /Йĕпреç районĕ/ сăмах каçмăшĕсемпе пуç ваттарнисĕр пуçне сăвă-хайлавĕпе те савăнтарчĕç.

Малашне те пĕрлех пуласчĕ, пĕр-пĕрне упрасчĕ!

ÇУРТ-ЙĔР

# Пысăк парне – «Лапланди» ача сачĕ

Çĕнĕ çул умĕн Шупашкарта, «Финская долина» микрорайонта «Лапланди» ятпа 204-мĕш ача сачĕ уçăлчĕ. Унта пĕтĕмпе 220 ача çÿреме пултарать, 10 ушкăнлăх вăл.

Савăнăçлă пухăва Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн заместителĕ Алла Салаева, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов хутшăнчĕç. Михаил Васильевич 2012 çултанпа Шупашкарта шкулчченхи вĕренÿ 16 организацийĕ уçăлнине пĕлтерчĕ. Çывăх вăхăтрах Алькеш поселокĕнче, Калинин районĕнче çĕнĕ садиксем хута каймалла.

**Елена АТАМАНОВА.**

ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ

# Çĕнĕ çул тĕлĕнтермĕшĕсем



Раççейри Çĕнĕ çул 308 çулта. 1700 çулта I Петĕр патша Çĕнĕ çула кăрлачăн 1-мĕшĕнче уявламалли çинчен ятарлă хушу кăларнă, çавăнтах çурт умĕсене, хапхасене хыр, чăрăш, уртăш тураттисемпе капăрлатмалли пирки каланă.

* * *

Англире уяв сĕтелне хатĕрлеме мар, лавккасем тăрăх çÿреме васкаççĕ. Раштавăн 27-мĕшĕнчен пуçласа унта мĕнпур тавара 95 процент таран йÿнетеççĕ. Сĕтел шухăш мар унта, тĕп вырăнта – кирлĕ япаласем туянса юласси.

* * *

Ирландире Çĕнĕ çул каçĕнче пÿрт алăкĕсене уçса хураççĕ. Кирек кама та кăмăллăн кĕтсе илеççĕ. Кĕтмен хăна çук кунта. Килнĕ çынна хĕрлĕ эрех сĕннĕ май «Çак çуртри тата пĕтĕм тĕнчери тăнăçлăхшăн» теççĕ. Тепĕр кунне уяв сĕтелĕ хушшине лараççĕ, йăла тăрăх пĕр-пĕрне кăмрăк парнелеççĕ.

* * *

Италире кивĕ çи-пуçа, япаласене чÿречерен кăларса ывăтаççĕ, мĕн чухлĕ ытларах пăрахнă – çавăн чухлĕ лайăхрах. Итальянсем Çĕнĕ çула çĕнĕ тумтирпе, çĕнĕ сĕтел-пуканпа кĕтсе илме тăрăшаççĕ. Пĕр-пĕрне хĕрлĕ тĕслĕ тум е япала парнелени вĕсемшĕн çĕнĕлĕх палли шутланать.

* * *

Австрире Çĕнĕ çул каçĕнче юмăç пăхаççĕ. Тăхланран ăсталанă кĕлеткесем туянаççĕ те çурта çинче ирĕлтереççĕ, ятарлă савăта ярса хураççĕ. Мĕнлерех кĕлетке пулса тăнипе Çĕнĕ çулта мĕн кĕтнине палăртаççĕ. Австри çыннисем уявра нумай çимеççĕ, кăрлачăн 1-мĕшĕнче те урама каçкÿлĕм çеç тухаççĕ.

* * *

Чăрăша капăрлатасси сĕм авалах пулнă. Ун чухне çынсем симĕс чăрăш ырă Турăсемпе çыхăнма пулăшать тесе шухăшланă, ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕчĕр тесе ăна тархасланă.

* * *

Болгарире Çĕнĕ çула уйрăмах хаваслă кĕтсе илеççĕ. Уяв сĕтелĕ хушшине вырнаçсан виçĕ минутлăха çутă сÿнтереççĕ. Ку «чуптăву саманчĕ», унăн вăрттăнлăхне вара тĕттĕмлĕх упрать.

* * *

Хурпа кăркка ашĕнчен пĕçернĕ апат-çимĕçсĕр Германипе Англире Раштав сĕтелĕ пулма пултараймасть. Англире яланах чăрăш лăссипе илемлетнĕ уяв пудингĕпе сăйлаççĕ. Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсенче капăрлатнă чăрăша сĕтел çинех лартаççĕ.

# Литература çулталăкĕ тухăçлă иртрĕ

***Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев патне Раççейри кĕнеке кăларакансен Ассоциацийĕнчен (АСКИ) çыру килнĕ. Унта Ассоциаци Президенчĕ Константин Чеченев Михаил Васильевича Раççейри Литература тата республикăри К.Иванов çулталăкне Чăваш Енре тухăçлă ирттернине палăртса тав тунă.***

Çитĕнÿсем куç умĕнче: Пĕтĕм Раççейри «Чи вулакан регион» конкурсра пирĕн Республика Федерацин малта пыракан субъектсен пĕрремĕш теçеткине кĕме пултарнă, «Çулталăкри чи лайăх кĕнекесем» ăмăртура Чăваш кĕнеке издательствин çĕнĕ кăларăмĕсем сумлă Дипломсене тивĕçнĕ.

Хальхи тапхăрти экономика лару-тăрăвĕ çăмăлах маррине пăхмасăрах Чăваш кĕнеке издательстви тĕрлĕ кăларăмсен шутне ÿстерсех пынине те палăртнă çырура. Тĕслĕх вырăнне Чăваш литературин антологийĕн черетлĕ томне, «Чăваш литературин историйĕ. XX ĕмĕр» вĕренÿ кĕнекине тата чăваш калавĕсен вырăсла кăларнă пуххине илсе кăтартнă. Федерацин «Раççей культури» тĕллевлĕ программипе килĕшÿллĕн кăçал республикăра виçĕ кăларăм кун çути курнине те асăннă.

Çыру вĕçĕнче Константин Чеченев иртсе пыракан Литература çулталăкĕ Чăваш Республикин ертÿлĕхне малашне те кĕнеке культурин аталанăвĕ валли тĕп никĕссене палăртса тухăçлă ĕçлеме хавхалантарасса шаннине пĕлтернĕ.

**Римма ПРОКОПЬЕВА.**

# Тăрăшсах вăй хутăмăр...

**КУЛЬТУРА.** Чăваш Республикинче Константин Иванов çуралнăкне халалласа поэт ячĕпе конференцисем, куравсем, акцисем, тĕлпулусем, «çавра сĕтелсем» йĕркелерĕç, кĕнекесем пичетленчĕç. Вăл çырса хăварнă йĕркесем вун-вун чĕлхепе янăрарĕç.



Кирилл Патриарх килни Чăваш Ен историне ылтăн саспаллисемпе çырăнчĕ. Чи малтан Пукрав тата Татиана соборне çул тытрĕ вăл. Тепĕр кунхине Апостолпа тан святой Владимир аслă кнеç ячĕпе Çĕнĕ Шупашкарта хăпартнă собортра Литурги турĕ. Кайран Шупашкарти «Çĕнтерӳ» асăну комплексĕ умне шурă кĕлчечексем хучĕ, панихида иртерчĕ. Кирилл Святейший Патриарх Таса пурнăçлă Сергий Радонежский ячĕпе Шупашкарта лартакан чиркĕвĕн никĕсне асăну капсулине хывни – асра тытмалли тепĕр самант.

Кăçал пĕрремĕш хут Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнине халалласа ветерансемпе пĕрле çамрăк ăру та парада тухрĕ. Кĕçĕннисем валли кадет, моряк, десант, МЧС, тинĕс пехотин тумĕсене ятарласах çĕленĕ.

Республикăра Пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль саккăрмĕш хут иртрĕ. Çак вăхăтра пурĕ тӳлевсĕр 56 фильм курма май килчĕ. Режиссерсемпе артистсем тĕлпулусем йĕркелерĕç. Кинофестивальпе çыхăннă 110 мероприятие 20 пине яхăн çын хутшăнчĕ.

Куславкка районĕнчи Карачра Марийăпа Яков Ухсайсен музейĕ уçăлчĕ. Экспонатсене çак мăшăрăн хĕрĕ Ольга Яковлевна пуçтарма пуçланă.

Республикăра «Пĕрешкел пулмасан та юрать» фестиваль виççĕмĕш хут уçăлчĕ. Беларусьран, Казахстанран, Удмурт Республикинчен, Пушкăртстанран, Крымран, Тутарстанран, Белгород, Курган, Мускав облаçĕсенчен хăнасем килсе çитрĕç чăваш çĕрĕ çине. Даун синдромĕпе чирлисем ташă зарядки йĕркелерĕç.

Пĕтĕм чăвашсен «Асам» I кинофестивалĕ иртрĕ. Ăна киноискусствăри пултаруллă çынсене тупса палăртас, чăваш киностудийĕн çитĕнĕвĕсемпе паллаштарас тĕллевпе йĕркелерĕç. Унта кĕске тата тулли метражлă илемлĕ, документ тата анимаци фильмĕсем кăтартрĕç. Гран-прие Марат Никитинăн «Хорло» фильмĕ тивĕçрĕ.

**СЫВЛĂХ.** ЧР Сывлăх министерстви хула тĕп больницин Шупашкарти Ленин проспекчĕнчи 12-мĕш çурта реконструкцилеме пуçларĕ. 1956 çулта хăпартнăскерне юсаса çĕнетме вăхăт çитнĕ. Ку ĕçе Чăваш автономи облаçĕ йĕркеленнĕренпе 100 çул çитнине халалланă мероприятисен йышне кĕртнĕ.

Çулталăк пуçламăшĕнче пирĕн тăрăхра «Маммолог онкопатрулĕ» профилактика акцийĕ вăй илчĕ. Çавна май маммограф комплексĕ ял-хула тăрăх çӳреме пуçларĕ.

Шупашкарти Гладков урамĕнчи 27-мĕш çуртра усал шыçăпа чирлĕ хĕрарăмсен психологи пулăшăвĕн центрĕ уçăлчĕ. Унта сиплевпе физкультура комплексĕн залĕ, физиотерапи, релакс тата тренинг пӳлĕмĕсем пур. Сĕтелпукана, спорт тата медицина оборудованине грант уксипе туяннă. Унта пурне те тӳлевсĕр йышăнаççĕ.

Пĕтĕм Раççейри республика тапхăрĕн «Поликлиника регистратурăран пуçланать» конкурсĕнче Ф.Г.Григорьев ячĕллĕ Канаш район тĕп больници, Хула клиника 1-мĕш больници, Президент перинаталь центрĕ чи нумай балл пуçтарнă.

Кальян туртассине хирĕç уйăхлăх иртрĕ. Чиновниксемпе общество организацийĕсен членĕсем усал йăлана кĕрешес ĕçе вăйлатасшăн. Кальян туртнă чухне сурчăкпа туберкулез, герпес, анлă сарăлнă ытти инфекци куçать.

Чĕре тата юн тымарĕсен чирĕсемпе кĕрешмелли çулталăк тăршшĕпе пин-пин çын – сывлăх сыхлавçисем, тĕрлĕ тытăмра ĕçлекенсем, тивĕçлĕ канурисем, студентсем, волонтерсем – Шупашкарти Хĕрлĕ тӳреме тухтăрпа пĕрле уçăлма тухрĕç. Çак акци пирĕн тăрăхра 2012 çулта вăй илчĕ.

**ВĔРЕНӲ.** Республикăри 470 шкулта кăçал 127 пине яхăн ача вĕренет. Пĕрремĕш шăнкăрав вунвиçĕ пин ытла ача валли янăрарĕ. Ача сачĕсене 70,7 пин шăпăрлан – çулталăкран пуçласа çичĕ çулччченхи ӳсĕмри ачасен 79 процентĕ – çӳрет. Кăçал кăна 7 çĕнĕ ача сачĕ хута кайрĕ.

2015 çулта 6 пин ытла хĕр-упраçпа яш-кĕрĕм шкул саккинчен уйрăлчĕ. Вĕсенчен 94,5 процентĕ аслă шкулсене, техникумсене, колледжсене çул тытрĕ.

РФ Президенчĕ çумĕнчи ача прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйĕн рейтингĕ тăрăх, Чăваш Ен ачасене пурăнма хăтлă 10 регион йышĕнче. Шкул çулĕччĕнхи, шкулта тата хушма пĕлӳ тытăмĕ те республикăра витĕмлĕ ĕçлет. 2015 çулта Чăваш Енри икĕ ача сачĕ Раççейри чи лайăх 100 ача сачĕ йышне кĕчĕç. Шкул çулне çитмен ачасем çӳрекен вĕренӳ учрежденийĕсенче ĕçлекенсен конференцийĕн кăтартăвĕсем тăрăх вара Раççейри чи лайăх 100 ача сачĕ йышĕнчен пиллĕкĕшĕ Шупашкарта вырнаçнă.

Республикăри шкулсем те çулсерен чи лайăххисен шутне кĕреççĕ. Хуларисем çеç мар, ялтисем те палăраççĕ.

Кăçалхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнче Раççейре пĕрремĕш хутчен географи диктанчĕ çырчĕç. Унта 72 пине яхăн çын хутшăнчĕ. Чăваш Енре географи пĕлĕвĕн шайне 781 çын тĕрĕслерĕ, вĕсенчен 393-шĕ – шкул ачисем, 134-шĕ – студентсем. Вăтам балл – 56 /Раççейре – 55/. Çав вăхăтрах хутшăнакансен 49,5 процентĕ географине вăтам шайран та япăхрах пĕлет.

2014-2015 вĕренӳ çулĕнче шкул пĕтерекенсене чылай çĕнĕлĕх кĕтрĕ. Вĕсенчен пĕри – сочинени /изложени/ çырасси. Кăçал ăна 6073 çамрăк /вĕсенчен 6-шĕ малтанхи çулсенче вĕренсе тухнисем/ çырчĕ. 99 процентĕ «зачет» паллăна тивĕçрĕ.

Шкул ачисене ял хуçалăхĕпе ытларах кăсăклантарас, ăна тарăнрах шĕкĕлчеме илĕртес тĕллевпе кăçал республикăра 7–11-мĕш классенче вĕренекенсен хушшинче пĕрремĕш хут хресчен олимпиадине йĕркелерĕç.

**СПОРТ.** Физкультурăпа спорт мероприятийĕсене ирттерессипе республика кăçал Хисеп хучĕпе Кубока тивĕçрĕ. 2 миллион таран халăх пурăнакан субъектсен хушшинче Чăваш Ен иккĕмĕш вырăн йышăнать. 82 регион хушшинче вара 6-мĕш вырăнта.

Сочире Олимп вăййисем пуçланнине халалласа Раççейре нарăс уйăхĕн 7-мĕшĕнче Спортăн хĕллехи тĕсĕсен кунне уявларĕç, ăна малашне те паллă тăвĕç. Унта, паллах, Чăваш Ен те хутшăнчĕ, пăр çинче ташă касĕ йĕркелерĕ.

Чăваш Енре 2005 çултанпа ирттерекен 33-мĕш «Раççей йĕлтĕр йĕрне» республикăри районсемпе хуласенче пурăнакан 51 пин ытла çын хутшăнчĕ кăçал.

Тĕрлĕ кăтартусене ĕненсен, республикăра пурăнакансен 37,2 процентĕ физкультурăпа тата спортпа туслă. Çакăнта физкультурăпа спорт кунĕсене ирттернин витĕмĕ те пурах. Вĕсене 2014 çултанпа йĕркелеççĕ, ырă йăлана çитес çул та тăсĕç.

Чăваш Ен кăçал тĕнче шайĕнчи спорт çăлтăрсене те пĕрре мар йышăнчĕ. Шупашкарта çĕртме уйăхĕн



20-21-мĕшĕсенче çăмăл атлетика командисен Европа чемпионачĕ иртрĕ. Раççей команди турнир историйĕнче тăваттăмĕш хутчен çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ.

Кăнтăр Корейăри Кванджу хулинче иртнĕ пĕтĕм тĕнчери çуллахи Универсиадăра Раççей пĕрлештернĕ команди иккĕмĕш вырăна тухма пултарчĕ. Пухмача Чăваш Ен хĕрĕсен пилĕк медалĕ те пуянлатрĕ. Раççей чысне 4 чăваш спортсменĕ хӳтĕлерĕ.

Çурла уйăхĕн 3–5-мĕшĕсенче вара тĕп хуламăрта çăмăл атлетикăпа Раççей чемпионачĕ иртрĕ. Вăл та çĕршыври паллă спортсменсене пухрĕ.

Чăваш Енре «Наци кросне» те халăх йышлă хутшăнать. Кăçал старта пурĕ 59,8 пин çын тухрĕ.

Республикăри спорт пурнăçĕн кăçалхи тепĕр пысăк пулăмĕ – «Шупашкар-Арена» пăр керменĕ уçăлни. Сăмах май, вăл нумаях пулмасть хăйĕн пĕрремĕш наградине тивĕçнĕ. «2015 çулти чи лайăх спорт сооружениййĕ» ята тивĕçсе пĕтĕм Раççейри премие илме пултарнă.

«Хыпар» хаçат парнисемшĕн ирттерекен турнир та пысăк хисепре. Кăçал 32-мĕш хутчен йĕркеленĕскерне 10 регионти 200-е яхăн спортсмен килнĕ, вĕсем кубоксемпе медальсен 33 комплектне салатнă. Ăмăртăва спортра пĕрремĕш утăм тăвакан çамрăксем те, пысăк чемпионатсен çĕнтерӳçисем те хутшăнаççĕ.

ЧР Пуçлăхĕн парнисене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ мелпе кĕрешекен хĕрсен хушшинчи Раççей кубокĕ те пысăк шайра иртрĕ.

**ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ.** Ял хуçалăх продукцийĕ туса илессин индексĕ кăçалхи 9 уйăхра 104 процентпа танлашнă. Çак ӳсĕм тĕпрен илсен аш-какай туса илесси, сĕт суса илесси ӳснипе, çавăн пекех çĕрулми тухăçĕ пысăкраххипе сăлтавланнă.



Тĕш тырă тата пăрçа йышши культурăсен кашни гектартан пухса кĕртнĕ вăтам тухăçĕ 20,6 центнерпа танлашнă. Пĕлтĕр ку кăтарту 21,8 центнер пулнăччĕ. Çĕрулми тухăçĕ те савăнтарать. Ăна кăçал 684,5 пин тонна пухса кĕртнĕ – пĕлтĕрхи виçен 124,5 процентĕ чухлĕ. Ял хуçалăх организацийĕсемпе пысăк фермер хуçалăхĕсенчи кашни гектар тухăçĕ 218,5 центнерпа танлашнă – çакă та пĕлтĕрхинчен чылай пысăкрах. Шупашкар районĕнче ку кăтарту 250 центнертан та иртнĕ.

Юлашки çулсенче республикăра агротехника енĕпе пысăк пĕлтерĕшлĕ куккурус çитĕнтерессии вăй илсе пырать. Сăмахран, 2010 çулта Чăваш Енре куккурус лаптăкĕ 2,4 пин гектар пулнă, кăçал лаптăк 2,8 хут пысăкланнă – 12 пин гектара яхăн. Вăл уй-хире çум курăкран тасатма пулăшать. Тĕп лаптăк – симĕс апат, сенаж валли. 2012 çултанпа Чăваш Енре çак культурăна тĕшĕлĕх те çитĕнтерме пуçланă. Вăрнарти аш-какай комбиначĕ виçĕ çул ăна 500-шер гектар акнă, кăçал вара 2,5 гектар çинче çитĕнтернĕ.

Кĕрхи культурăсене 82,5 пин гектар çинче акса хăварнă. Шел те, ку планланинчен сахалрах – 82,1 процент чухлĕ. Пĕтĕмпе 181 пин гектар çĕре сухаласа хăварнă – ку кăтарту пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен кăшт пысăкрах.

Кăрлач-авăн уйăхĕсенче аш-какай туса илесси 15,8 процент ӳснĕ, сĕт ӳсĕмĕ 0,6 процентпа танлашнă. Аш-какай тĕлĕшпе ку ӳсĕме ял хуçалăх организацийĕсемпе фермер хуçалăхĕсем тивĕçтернĕ.

Сĕт пирки калас-тăк – кăçалхи 9 уйăхра унăн хуçалăхсем суса илнĕ виçи 5,2 процент хушăннă. Уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче вара 1,5 процент чакнă.

Выльăх-чĕрлĕх фермисем туни, пуррисене çĕнетни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кăçал 4 млрд тенкĕлĕх 19 инвестици проектне пурнăçланă. Çав шутра – Элĕк районĕнчи «Новый путь», Вăрнар районĕнчи «Мураты», Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕллĕ хуçалăхсенче, Красноармейски районĕнчи «Волит», Çĕрпӳ районĕнчи «Вурнарец» ООО-сенче, Тăвай районĕнчи «Акконд-Агро» фирмăра тата ыттисенче.

Республикăра 2012 çултанпа ĕçе пуçăнакан фермерсене пулăшмалли тата çемьесен выльăх-чĕрлĕх фермисене аталантармалли программăсем пурнăçланаççĕ. Сăмах май, республикăра çемье фермисене аталантармалли программăна ашлăх выльăх çитĕнтерекен 2, лаша ĕрчетекен 1, сăвакан ĕнесем тытакан 19 фермер хутшăнать. Тăватă çул хушшинче асăннă пргграммăпа ĕçе пуçăннă 184 аталану пргграммисене патшалăх енчен пулăшмашкăн конкурс никĕсĕ çинче суйласа илнĕ.

Çурт-йĕр строительстви вăй илет – ялсен сăн-сăпачĕ улшăнать. 2003 çултанпа, ялăн социаллă аталанăвĕн тата ялсен территорийĕн аталанăвĕн программисене пурнăçлама тытăннăранпа, ялсенчи 4,7 пине яхăн çемье çурт-йĕр тума е туянма патшалăх пулăшăвĕпе усă курнă. Çав шутра – 1,7 пин ытла çамрăк çемье тата çамрăк

# Тăватпӳрт вăрманĕнчи улмуççи...

Часах çывăрса каяймарĕ вăл. Пĕр енчен тепĕр енне куçса, шуçса пăхрĕ. Çав самантра пĕрех май ахлатрĕ те, эхлетрĕ те... Ватлăхри шăмшак, виçĕ çул каялла тăруках шалкăм çапнăскер, виттĕр-виттĕр туртса сурчĕ. Ыйхă вĕçнĕ самантра тата юратнă мăшăрне – Кольăна – умĕнчен ямарĕ. Вăл чĕрĕ чухнехи евĕрех, çума-çумăн выртса унпа калаçрĕ.

Çамрăклăха, яшлăха аса илчĕ Феврони аппа. Ума Тăватпӳрт вăрманĕнчи ешĕл çулçăллă, хăлаçа вырнаçайми улмуççи тухса тăчĕ. Анăçран юхса килекен çилпе хумханать хăй. Хăйпе юнашар тăракан çирĕм урлă каçнă каччăпа хĕр ытамĕнче вĕсемпе йăпанать, пăшăлтатать.

– Феврони, сирех, сирех куç хыврĕ ман чĕрем, – хăй шухăшне уçать каччă. – Юратсах сире ăсататăп...

– Коля, тăхтăр-ха, юратсах ăсатни аван... Çемье çинчен хальлĕхе, – каччăн куçĕнчен йăвашшăн пăхать хĕр-упраç... – Тăхтар-ха кăштах...

– Тăхтар-ха кăштах... Çук, маншăн ку сăмахсем ют... Эпĕ пилĕк хĕртен пĕр ывăл... – çине тăрать каччă. – Авланма тивĕçлĕ эпĕ...

– Мăшăрланма укçи çукрах... Тата тухма-кĕме çипуçĕ те çукрах... – вăтанать хĕр-упраç. Тăхтар-ха кăштах...

Çапла, пуçласа 1954 çулта тĕл пулнă Кайри Типçырма хĕр-упраçĕпе Яманак каччи Коля Львов. Ун чухне Феня аппа /Феврония Егорова/ тус-тантăшĕпе кӳршĕллĕ Кушкă ялне концерт курма кайнăччĕ. Коля Львов вара, мĕн ачаран юрлама-ташлама кăмăлланăскер, сцена çинчех юрă шăрантаратчĕ. Тулли сăн-питлĕ, сырă çÿçлĕ, тĕреклĕ хул-çурăмлă каччăна Феврони пĕрре курсах чĕре ытамне илчĕ. Анатри Типçырма хĕр-упраçĕ те хăйĕн сăн-сăпачĕпе, чун уççипе тыткăлланă çав ăна...

Ун çывăхĕнче, ун патĕнче миçе хутчен алăпа алă тĕкĕнмен, çупăрламан тата илемлĕ сăн-питрен миçе хутчен чуп туман пулĕ каччă хĕр-упраçа.

1934 çулхи çĕртме уйăхĕн 6-мĕшĕнче Анатри Типçырмара, Мăн Шетмĕ юханшывĕ хĕрринчи ялта, çуралнă Феврония Егоровна Львова. Çемьере вăталăххи. Кушкăри шкул сакки хыççăн Красноармейскинчи вăтам шкулта вĕрентет. Учитель, агроном пулас ĕмĕт-шухăш канăç паман пултарулăскере. Мĕн тăвăн?!

– Тăрăшса пăхрăм-ха икĕ хутчен те... Ялхуçалăх институтне пĕр вырăна виçĕ çын пайланипе кĕреймерĕм... – хăй пăшăрханнине пытараймарĕ Феврони аппа. – Яманак ял Советне депутата суйлансан ĕçтăвком секретарьне лартрĕç.

1957 çулхи çу уйăхĕнче Яманакра çĕнĕ çемье хутшăнать. Ялти шкул завхозĕ – Николай Львов ялти ял Совет ĕçтăвкомĕн секретарĕпе Феврония Егоровапа çырăнать. Телейлĕ, юратуллă, туслă мăшăр, паллах... Феврони аппа мăшăрĕ – Николай Алексеевич ял-йышра ятлă-сумлă, кил ăшшиллĕ çынсенчен пĕри пулнă. Мăшăрне пули-пулми шур куçпа пăхма-и, чышкисене чăмăртама-и?!.

– 1931 çулхи çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕнче çуралнăччĕ вăл. Шел, 2005 çулхи раштав уйăхĕнче çĕре кĕчĕ. Ултă ывăлпа пĕр хĕр çуратрăмăр иксĕмĕр. Шел, 1969 çулта çуралнă Юра ывăлăмпа 1979 çулхи Валентина хĕрĕм вăхăтсăрах уйрăлса кайрĕç, – куç лакăмĕнчи вĕри тумламсене пытараймарĕ ватă. – Хама та вĕсемшĕн кулянниех-ши сылтăм аяк енчен шалкăм çапрĕ.

Виççĕмĕш хĕл тухса çӳреймест, чунне уçса калаçаймасть, уçăлтараймасть вăл. Сулахай алăпа ура итлеменни, ыратни-сурни тепĕр чух çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупайманни, канăç памасть. Эх, çав тери кансĕр те йывăр ăна. Ачисем, мăнукĕсем пурри, тăванĕсем кăмăлсипетпе кĕрсе тухни хавхалантарать, тунсăха уçать çав... Сăмах май, Феврония Львова 1962 çулчен Яманак, Карай ял Совет ĕçтăвкомĕн секретарĕн «тилхепине» тытса пынă. «Красное Сормово» колхозра ĕçленĕ, ачисене тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтернĕ. Трак ен ентешлĕх ертӳçинче вунă çул ытла çине тăрса тăрăшакан Алексей Николаевич Львов пирки ăшă сăмах чылай манăн. Унăн культурăпа литературăна тата искусствăна аталантарас, çул парас çĕрти тӳпи иксĕлми.

Пĕтĕмлетсе мĕн калам-ха: пурнăç урапи çаврăнтăр, çаврăнтăр... Хуйхасуйха çеç аяккалла сиртĕр вăл.

Сывлăх пулсан, чĕре тапсан, пурăнатпăрах.

**Георгий ТУСЛИ.**

# Тăманлă ирхине...

Канмалли кун пулин те ирех çула тухма тиврĕ пирĕн. Çăмăл машинăна тăваттăн вырнаçрăмăр та малалла ерипен кĕрлеттертĕмĕр. Чарăнми тăкăнакан юр «тимĕр урхамахсене» самаях чăрмантарать. Фарисене çутатса тĕрлĕ транспорт васкамасăр ирте-ирте каять. Кунашкал çанталăкра инкек-синкек сиксе тухасран, паллах, питĕ асăрханулла пулмалла.

Ишек тĕлне çитнĕ çĕре самаях çутăлчĕ. Элĕке каякан çул хĕреслĕхĕнчи станцăра машинăна бензин янă хыççăн нумай та каяймарăмăр, пĕлĕшĕм чипер калаçса пынă хушăрах йăшăлтатма, лара-тăра пĕлмесĕр темĕн шырама пуçларĕ, унталла-кунталла пăлханчăклăн пăхрĕ.

– Укçа енчĕкĕ çухатмарăн пулĕ-çке? – сăлтавне пĕлесшĕн пултăмăр эпир.

– Пуçа çухатрăм курăнать. Ара, калпак чĕрçи çинчехчĕ. Унчченлĕхе хывнăскер йĕп пек... таçта кайса кĕчĕ. Вăт, станцăра тухса кĕнĕ чухне ӳксе юлчĕ-тĕр, – айăплăн калаçрĕ хĕрарăм.

Хайхи пурте ларкăчсене, ура айĕсене тĕрĕслетпĕр. Анчах калпак никамăн аллине те кĕмест.

– Кайрăмăр каялла! – тинех çăвар уçрĕ водитель. Эпир станцăна çитнĕ тĕле унтан пĕр «Жигули» тапранса тухрĕ. Урăх никам та курăнмарĕ. Калпак хуçи васкасах касса умне чупрĕ.

– Кассир юлташ, юр çинче лапсака çăмлă калпак асăрхамарăр-и? – пĕчĕк чӳречерен шалалла тинкерчĕ вăл. Унта ĕçлекен хура кĕске çӳçлĕ çамрăк çын йăл кулчĕ те.

– Йытă курнă ăна, – терĕ. – Чăн та, малтанах нимĕн те ăнланмарăм-ха. «Мĕн хыпнă-ши ку?» – тесе тухсах пăхрăм. Калпак иккен. Йытă эпĕ çывхарсанах тарать. Аран туртса илтĕм, – пулни-иртнине каласа панăçемĕн шалтан калпак илсе тухса тыттарчĕ вăл.

– Тавах, ырă çыннăм. Çухалман иккен-ха «пусăм». Ятна каласамччĕ, – тинех хавасланчĕ пĕлĕшĕм.

– Саша ятлă.

– Мухтав сана, Саша. «Ыр тăвакан ыр курать», – тенĕ ваттисем. Пӳлĕх пулăшса пытăр сана. Тепре куриччен, Саша.

**Ирхи çулçӳревçĕсем.**

*ПУЛАТЬ ВĔТ!*

# Хĕл Мучи парни

Вăтăр çула çитрĕм пулин те Çĕнĕ çул каçĕнчи асамлăха ĕненме пăрахмастăпха. Хама мĕн астăвассах сехет вуниккĕ çапнă чухне Хĕл Мучирен çитес çул валли ырăлăх ыйтатăп. Такам систернĕ-ши кун пирки е хамах ăс çитернĕ-ши? Пысăк çемье: «Çĕнĕ çул ячĕпе!» тесе кăшкăратчĕ, пĕр-пĕрне çĕнĕ телейпе саламлатчĕ, эпĕ вара шăппăн çеç тăрса ăшăмра тепĕр çулталăка та çак йышпах, чĕрĕ-сывă ирттерме ĕмĕтленеттĕм. Сывă тăвансем валли сывлăхпа телей ыйтаттăм.

Халĕ те çаплах. Çĕнĕ çула хăть те мĕнле ушкăнпа кĕтнĕ чухне те тăвансем пирки манмастăп, хамăн чи пысăк ĕмĕте те пуçăмра тепре çаврăттаратăп. Хĕл Мучи çакна илтетех пулĕ. Халĕччен кӳрентерменччĕ-ха.

Темĕн те ыйтнă унран: шкулта вĕреннĕ чухне экзаменсене ăнăçлă тытса вĕренме кĕнинчен пуçласа савни таранах. Каччă тенĕрен, çак çула çитсе кун пек парне шучĕ миçене çитрĕ-ши? Хĕл Мучи мар, хам та ас тумастăп. Ыйтнине кашнинчех пурнăçлать тата шур сухал – кӳрентермест.

Шкул пĕтерес чухне тантăшăмсем клуба тухма тытăнсан, вĕсене килне каччăсем ăсатнине илтсен, эпĕ те юратăва тĕлпулма ĕмĕтленеттĕм. Вунпĕрмĕш класра вĕреннĕ чухне паллашрăмăр пĕринпе. Икĕ çул туслă çӳрерĕмĕр. Хулара вĕреннĕ чухне те унран калаçнисене шута илмесен те, пилĕк-ултă каччăпа çӳрене эпĕ. Кашниех арăм тума ĕмĕтленетчĕ, телейлĕ пурнăç пирки юмахлатчĕ. Анчах пĕри те шурă кĕпе тăхăнтартмарĕ. Те хам ылта тата мăнкăмăллă, те каччисем айван?

Урăх нимĕн ыйтма пĕлмен пек, çултапăк каялла та Хĕл Мучие савни шыранине систертĕм. Айванла пек те – çук. Манăн çула çитсен качча кайман ватă хĕрсен шăпах ăна ыйтмаллах. Çамрăк чухне, çирĕмре, парне – каччă – ыйтни ачапчалла пулнă. Йĕри-тавра мĕн чухлĕ вĕсем – суйла та суйла.



Вăт хайхи тепĕр савни ыйтрăм та. Шурă сухал тӳрех илтрĕ курăнать, пĕр кунхине ĕçе васкинă чухне маршруткăра манпа юнашар илемлĕ йĕкĕт вырнаçрĕ. Ăмсанса пăхрăм ун çине. Тахăш самантра вăл та ман еннелле куçне ывăтнине сисрĕм, сăмах пуçарасса кĕтрĕм. Çук, калаçмарĕ каччă. Чарăну та çывхарсах пычĕ. Эпĕ те чипер яшпа паллашма май килменшĕн кулянса ассăн сывларăм та алăк еннелле васкарăм. «Перчеткĕре çухатса хăваратăр вĕт», – илтрĕм чĕннине. Çаврăнса пăхрăм та – хайхи каччă ман хыçра тăрать иккен. Эпĕ ăна тав турăм та хамăн çулпала уттартăм.

Ĕç хыççăн чарăнура тепĕр хутчен тĕлпултăмăр унпа. «Аллăр шăнмасть-и? Перчеткĕр пур-и?» – шӳтлерĕ вăл ман çума пырса тăнă май. Çапла çав кунах Сашăпа кафене кайса чей ĕçрĕмĕр.

Час-часах мар пулин те шăнкăравлама тытăнчĕ, сайра-хутра курнăçрăмăр. Сашăпа хутшăнма тытăнни пилĕк уйăх та çитнĕччĕ ĕнтĕ. Çĕнĕ çула çывăх çынпа кĕтсе илес ĕмĕтĕм пурнăçланасса та шанма тытăнтăм. Анчах пĕр кунхине тавлашу хирĕçĕвех куçрĕ. Эрне шăнкăравламарĕ Сашук. Эпĕ те ун хыççăн чупас çук. Вăхăт иртнĕ хыççăн çухалнă çын тупăнчĕ, анчах айăпа кĕнине йышăнмарĕ вăл, каçару ыйтасси пуçĕнче те пулмарĕ – пушшех кӳрентерчĕ.

Кĕтмен çĕртен шăнкăртатрĕ телефон. Палламан çепĕç сасă ырă каç сунчĕ. Екатеринăна шырарĕ. Ку вĕçĕнче Валентина калаçнине пĕлсен йăнăшнине ăнланчĕ, анчах телефонне пăрахма васкамарĕ. Эпĕ те сӳнтерме хыпаланмарăм. Паллаviolман çынпа пĕлĕшсем майлах калаçрăмăр. Тепĕр кунхине те шăнкăравларĕ вăл, çывăхарах паллашма сĕнчĕ.

Тĕлĕнмелле те, Хĕл Мучи паракан кашни шанчăка усă курас тесе-ши, эпĕ те урама тухса вĕçтертĕм. Максăм кинона илсе кайрĕ. Манран пилĕк çул аслăрахскер мăшăрĕнчен пĕр ачапа тăлăха юлнине пытармарĕ. Тăххăрти хĕрне ытларах чухне асламăшĕ пăхать иккен. Ашшĕ те юратать ăна, уншăн тем тума та хатĕр. Акă француз чĕлхине вĕрентессишĕнех пĕлĕшĕ сĕннĕ Екатеринăна шăнкăравланă. Шăпа пулĕ – йăнăшпа ман патăма лекнĕ.

Çемьере хĕрарăмсăр май çуккине пĕлсе çĕнĕ арăм илсе кĕме те хирĕç марччĕ Максăм. Йĕркеллине тупсан паллах. Амăшĕ те ывăлĕ тепĕр чухне каярах тавранăнишĕн тарăхмастчĕ, çавăнпах хушăран арçын тĕлпулăва чĕнетчĕ. Хирĕçлеместĕм. Мана килĕштерчĕ курăнать, пĕр вăхăтран хăйсем патне хăнана чĕнчĕ, амăшĕпе тата хĕрĕпе паллаштарасшăн пулчĕ. Нумай турткалантăм. Иккĕленĕве те пĕрре мар путрăм. Максăм шанчăклă та çирĕп пулнăран, ун çумĕнче хама нихçанхилле телейлĕ туйнăран юлашкинчен килĕшрĕм. Шикленни ахалех пулчĕ. Пулас хуняма та, Кĕтерук та ăшшăн йышăнчĕç.

Çĕнĕ çемье халĕ манăн. Çĕнĕ çула шăпах унпа пĕрле кĕтсе илетĕп те. Хĕл Мучирен юлашки хут савни ыйтнăранпа мăшăрлă та, ачаллă та пултăм темелле. Тавах, Кĕтерукпа та пĕр чĕлхе тупрăмăр. Çĕнĕ çынсен хушшинче хама çав тери телейлĕ туятăп. Вĕсене ăшăлăхпа çепĕçлĕх парнелеме тăрăшатăп. Чи çутă ĕмĕтпе пурнăçатăп – Хĕл Мучирен пепке ыйтас тетĕп.

**ВАЛЕНТИНА.**



МАН КИЛЕС

# Марина Туманалова: «Çил ачи питрен ачашлать»



**Эпир, журналистсем, çул çÿреме юрататпăр. Республикăн тĕрлĕ кĕтесне çитетпĕр, унти лару-тăрупа паллашатпăр, ял-йышпа туслашатпăр. Кăçалхи çул та нумай пулăмпа асра юлчĕ. Хăшне-пĕрне çырса кăтартам.**

Чăнах, мĕнле хăват çул кăтартса пырать-ши пире? 2013 çулта Муркаш районĕнчи Юнкăри эмел курăкĕпе сипленекен Зоя Петрова пирки хаçатра çырнăччĕ. Хальхинче ятарласах унăн сăнÿкерчĕкĕсене чиксе кайрăм. Пĕчĕк парнепе унăн кăмăлне çавăрасшăнччĕ. Хăнана кĕрсе тухма пулатчĕ-ха, анчах вăхăт çукки пĕтерет. Çавăнпах сăнÿкерчĕксене ача садĕнче тăрăшакан унăн тăванĕ патĕнче хăварас-и теттĕм. Эпĕ, пысăк ĕç тума килнĕскер, ял администрацине чарăнмасăрах почта еннелле васкаса утрăм. Аякранах куратăп – мана хирĕç пĕр хĕрарăм килет. «Зоя Васильевна пултăрахчĕ вăл», – ĕмĕтленетĕп хам. Ак тĕлĕнтермĕш – чăнах та манăн пĕлĕш иккен. Йĕри-тавра никам та çук. Кам тĕлпултарчĕши иксĕмĕре? Çав кун ăнăçлă пуçланчĕ. Нумай-нумай ăшă сăмах каларĕ мана Зоя Васильевна.

Каялла килме тухрăм. Шупашкар автобусĕ халех килменнине çынсенчен пĕлтĕм. Эпĕ Юнкă чарăнăвĕнчен федераци трасси çине çăмăл машинăпа ларса тухасшăнччĕ. Анчах... водительсем курмăш пулса иртнине ниепле те йышăнас килмерĕ. Хăшĕ-пĕри пуçне юриех пăрни кулăшла туйăнчĕ. Укça та тÿлĕттĕм. Миçе сехет тăтăм-ши çавăн чухне? Юрать Муркаша каякан ГАЗель аслă çул çине лартса тухрĕ. Çил пек вĕçтерекен транспорт еннелле пăхма та ĕлкĕреймерĕм – чаплă иномарка килсе те чарăнчĕ. Ку хутĕнче салона кĕме хам шиклентĕм.

Тепрехинче Муркаш районĕнчи Калайкассине çитмеллеччĕ. «Раща» чарăнăва каймалла пулнă та манăн, эпĕ хула варринчи вокзалтанах ларса тухас терĕм. Эх, çав расписание пĕлменни! Пĕри – кайнă, тепри халех килмест... Хыркассине çитиччен анса юлмалла пĕр автобус салонне кĕрсе вырнаçрăм.

Тăратăп çапла чарăнура. Кĕрсе тăмалли вырăн çук. Шăнсан çул хĕрринчи кафене кĕрсе ăшăнма пулать-ха. Анчах манăн палăртнă çĕре хăвăртрах çитес килет. Çил ачи питрен те ачашлать, те чĕпĕтет – нимĕн те ăнланмастăп. Иртсе каякан çăмăл машинăсем те чарăнса пăхрĕç. Ырă шухăшлă çынсемех пуль-ха çав водительсем, çапах, манăн шухăшпа, аслă çул çинче «маршруткăпа» çÿреме шанчăклăрах. Етĕрнене каякан автобус водителĕ мана шеллесе лартрĕ. Вăл туххăмрах кирлĕ çĕре çитерчĕ. Унта мана иртенпех кĕтеççĕ иккен.

Командировкăран киле хăвăртрах çитес килет. Маршрут ГАЗелĕ килсе чарăнчĕ те салона йăпăр-япăр кĕрсе лартăм. Кăмака çумĕнче мĕнле ăшă! Тепĕр кунхине отчет тума пуçласан тин билет çитменнине ăнланса илтĕм. Пĕртен-пĕр хут тĕрĕслемерĕм те улталантăм. Билет кирлĕ пулмĕ терĕ-ши водитель?

Пире, хаçат ĕçченĕсене, кирек ăçта та ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Тавах çĕнĕ юлташсене уншăн. «Чăваш хĕрарăмне» черет тăрсах çырăнса илни те савăнтарать. Çĕнĕ çулта та пĕрле пулăпăр! Уяв ячĕпе, туссем!

# Елена Атаманова: «Çĕрпе кăвапапа çыхăннă чăваш»



Юрать, ĕç пур. Çакă та пысăк телей. Килте алă усса ларма хăнăхман çав эпир. Пуринчен ытла çула тухни киленÿ кÿрет мана, ялсем тăрăх кашни кун çÿреме те хирĕç мар. Шел, вăхăчĕ хăвăрт шăвать, тунтикун пуçланать те тахăш вăхăтра эрнекун çитет: пирĕн хаçат кăлармалла, хитре материалсем çырма ĕлкĕрмелле. Республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнче хам валли мĕн чухлĕ çĕнĕ тус-юлташ тупрăм. Вĕсем шăнкăравласа ман пурнăçăмпа кăсăкланса тăраççĕ, хăнана чĕнеççĕ, хавхалантараççĕ. Йывăр вăхăтра та алă тăсма хатĕр. Ăш пиллĕ кукамай-асаннесем кашниччех пил парса яраççĕ.

Ялсенче ыррине, лайăххине ытларах куратăп. Чăн та, çĕрпе кăвапапа çыхăннă чăваш. Патăрьел районĕнчи Çĕнĕ Ахпÿрт ялĕнче пĕрре мар пулса курнă. Тĕлĕнмелле ĕçчен халăх пурăнать ку тăрăхра. Кашни килрех вăрлăх сухан ÿстереççĕ, çуркунне ăна акман çын çук та пулĕ. Хăйсен вăйне, тăрăшулăхне кура ыттисенчен уйрăларах тăраççĕ ку тăрăхри чăвашсем. Çимĕçе ÿстерме çеç мар, ăна вырнаçтарма та пĕлмелле-çке. Апла çаврăнăçулăх та кирлĕ. Тăнăçлăхпа чыс-хисепе вĕсем ĕçченлĕхне тата хастарлăхне кура çĕнсе илеççĕ. Çакă савăнтарать мана. Туртать çĕр чăваша хăй патне, туртать. Ĕçченлĕхне кура тăрантарать ăна, тумлантарать, тупăш та кÿрет, малалла аталанма вăй-хăват хушать. Пурăнатпăр-ха апла пулсан!

Çырăнтару тапхăрĕнче ытларах кăнтăр районĕсем тăрăх çÿреме тивнĕччĕ. «Чăваш хĕрарăмĕпе» туслаштарас тесе манпа пĕрле килрен киле, пĕр организацирен теприне хутланă маттур та ĕçчен, тăрăшуллă почтальонсене пĕтĕм чунтан тав тăватăп, сывлăх сунатăп. Малашне те пĕрле пулса вулакансен йышне тата ÿстересчĕ.

Тĕрлĕ район тăрăх çÿреме килĕшет мана. Çул çинче мĕн кăна курмастăп-ши? Хура кĕркунне витререн тăкакан çумăр айĕн те утма тивнĕччĕ. Автобус çук, манăн вара палăртнă яла çитмелле, унта вулакансем кĕтеççĕ. Нимех те мар, çумăр хыççăнах хĕвел йăл кулчĕ. Муркаш тăрăхĕнчи Коминтерн ялĕнче икĕ хутчен пултăм кăçал. Унта Герольд Алексеев экс-министр пурăнать. Вăрман тăрăх пылчăк ашса çÿресе икĕ пушмак пĕтертĕм çав выççăлккăра. «Хыпар» Издательство çурчĕн» машини вăрманти лачакара виç сехет çăрăлчĕ. Юрать, ял çыннисем йывăрлăхра пăрахмарĕç, сĕтĕрсе кăларчĕç пире, унсăрăн вăрманта çĕр каçма тиветчĕ пулĕ. Пушмакĕсем мур патне, унта пурăнакансене шел мана! Çулсăр епле-ха хальхи вăхăтра? Коминтерна ватăсем те, пĕчĕк ачаллисем те пур. Турă сыхлатăр, темĕнле инкек те сиксе тухма пултарать пурнăçра.

Пурне те ырлăх, сывлăх, телей сунатăп. Килĕшÿпе юратура пурăнăр. Çитес çул та пĕрлех пуласчĕ! Çыхăну ан татăлтăрччĕ. Çĕнĕ çул ячĕпе, туссем!

# Татьяна Наумова: «Килĕрсенче ăшă та çутă пултăр»



Тин çеç сăмах илсе, хаклă вулаканăм, сана çывхарса килекен Çĕнĕ çул ячĕпе саламланăччĕ. Акă паян Сурăха ăсатса Упăтене кĕтсе илме те вăхăт çитрĕ. Ытла та хăвăрт шăвать-çке вăхăт. Тытса та чараймăн. Тепĕр тесен кирлĕ те мар-тăр. Чуптăрах малалла. Çĕнĕрен çĕннине шыратăр, эпир те унран юлар мар...

Çулталăк вĕçленнĕ май яланхиллех çак тапхăрта мĕн ĕçленине пĕтĕмлететпĕр, иртекен çул мĕнпе асра юлнине аса илетпĕр. Мĕнпе-ши? Чи малтанах ывăлăм ача садне çÿреме пуçланипе ахăр. Ачамăрсенчен хаклăраххи пурнăçра мĕн пултăр-ха? «Анне» ята илтсен кашни çĕнĕлĕх, кашни асам, кашни савăнăç тĕпренчĕксемпе çыхăнать-çке.

Кукашшĕ-кукамăшĕпе ялта пурăннăскер халĕ – хула каччи. Апла пулин те, шурă кулач çисен те, тăван чĕлхепех калаçатпăр унпа. Ялта пурăннă чухне чăвашла çеç сăмах хушнăран куншăн ÿкелешес текенсем те тупăнчĕç: ача садне çÿреме тытăнсан йывăр пулать имĕш, хăвăрт калаçма хăнăхаймасть, икĕ чĕлхене арпаштарма тытăнать. Никама итлемесĕр хам шухăш çинче çирĕп тăтăм: эпĕ калаçмасан ывăлăмпа чăвашла кам пуплĕ-ха? Тăван сăмахлăхпа кам паллаштарĕ? Тăван чĕлхене манса ачисене вырăсла вĕрентекен ашшĕ-амăшĕ ялта ахаль те нумайланса пырать. Çирĕп шухăшăм тĕрĕс иккенни куç умĕнчех: чăвашла та, вырăсла та пĕлет халĕ ывăлăм. Акă çитĕнĕ те, такăнмасăр пушшех илемлĕ калаçакан пулĕ.

Тăван чĕлхене, несĕлĕмĕрсен пуянлăхне, вĕсен йăли-йĕркине упрама суннă май тата мĕн хушса калам-ши? Паллах, вулаканăм, сывлăхлă пурăн! Туслă çыхăнăва малашне те упрасчĕ, татас марччĕ ăна. Сĕтелÿ те çăкăртăвартан ан татăлтăр.

Упăте лара-тăра пĕлмен чĕрчун иккенне шута илсе çăлтăрсем çитес çул кăмăл-туйăм тĕлĕшĕнчен расна килессе систереççĕ. Апла пулин те ан кулян, тăванăм! Ку чĕрчун хушăран виçесĕр савăк е питех те хаяр пулсан та çемье ăшшине кăмăллать, Пурнăç тума шанчăклă та çирĕп тус çеç суйлать. Сирĕн кил-çуртра та яланах хăтлă та çутă пултăр, килĕшÿпе çураçу хуçаланччăр – çитес çулталăк хуçи хăйне питех те шеп туйтăр. Ырă шанăçа тÿрре кăлартăр, савăнăçлă та манăçми туйăмсем парнелетĕр.

Çутă та таса ĕмĕтĕрсем те пурнăçланччăр! Хĕл Мучирен хăваршăн чи хаклине ыйтма ан манăр. Шурă сухал кÿрентермĕ, май пур таран савăнтарма тăрăшĕ.

Çĕнĕ çул ячĕпе, туссем!



## Апачě тутлă пултăр

### «Чăрăш туратти» салат



**Пуçлă 1 сухан, 2 çăмарта, тěтěмленě 200 грамм чăх какайě, консервланă 1 банка куккурус, 1 хăяр, майонез, сыр, укроп, пылак пăрăç кирлě.**

Пěçернě çăмартана тăваткалласа турамалла. Суханпа хăяра – вěттěн, чăх какайне пěрчěлесе касмалла. Çимěçсене майонезпа пăтратмалла. Салата теркăланă сырпа витмелле. Укропа чăрăш туратти майлă хумалла. Пылак пăрăçран тетте касса кăлармалла.

### «Хěллехи юмах»

**Тăварланă 100 грамм форель, пуçлă 1 сухан, маринадланă 1 хăяр, 50 грамм хытă сыр, майонез, укроп кирлě.**

Вěтетнě сухана маринадра /уксус, шыв, тăвар, сахăр, авăртнă хура пăрăç/ 20 минут тытмалла. Пулла, хăяра тăваткалласа касмалла. Сыра теркăламалла. Çимěçсене майонезпа пăтратмалла. Салата укроппа илемлетмелле.

### Тартар

**Тăварланă 100 грамм семга, 1 хурма, 1 апат кашăкě гранат вăрри, 30 грамм сухан, укроп, 1 апат кашăкě олива çăвě, 1 чей кашăкě лимон сěткенě кирлě.**

Хуппинчен тасатнă хурмана тăваткалласа турамалла. Сухана вěтетмелле. Пулла пěрчěлесе касмалла. Çимěçсене олива çăвěпе, лимон сěткенěпе пăтратмалла.

### Сыр çаврашки

**Хытă 150 грамм сыр, шăратнă 150 грамм сыр, вăрăсăр иçěм çырли, 50 грамм астăрхан мăйăрě, 50 грамм фисташка кирлě.**

Теркăланă икě тěрлě сыра пăтратмалла. Мăйăра блендерпа вěтетмелле. Сыр хутăшěнчен çаврашкасем тумалла, варрине иçěм çырли хумалла. Кашнине мăйăр çăнăхěпе йăваламалла.

### Шăккалат пасти

**150 грамм типě сěт, 150 грамм сахăр, 150 миллилитр шыв, 1 апат кашăкě услам çу, 3 апат кашăкě какао, 1 чей кашăкě кофе, ванилин кирлě.**

Вěрекен шыва сахăр, кофе, ванилин, сěтпе какао, услам çу хушмалла. Хатěр пастăна сивěтмěшре упрамалла.

### Кěсел мусě

**1 пачка панулми кěселě, 100 грамм хăйма, 200 грамм тăпăрч, 10 грамм желатин, 75 грамм сахăр, 200 миллилитр шыв кирлě.**

Кěселе вěри шывпа пăтратмалла.

Желатина шывра шÿтермелле.

Тăпăрча сахăрпа, хăймапа пăтратмалла. Çак хутăша кěселпе, желатинпа пăтратмалла. Муса креманкăна ярса сивěтмěше лартмалла.

### Кальмар катлечě

**500 грамм кальмар, 1 çăмарта, 2 татăк батон, 1/2 стакан сěт, пуçлă 1 сухан, вěтетнě сухари, тип çу, тăварпа пăрăç кирлě.**

Кальмара вěри шыва чиксе кăлармалла, унтан тасатса авăртмалла. Вěттěн туранă сухана тип çупа ăшаламалла. Батон татăкне сěтпе йěпетмелле.

Кальмар фаршне çăмартапа, суханпа, батонпа, тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла. Çак хутăшран катлет тумалла. Кашнине сухарипе йăваласа тип çупа ăшаламалла.

### Печени торчě

**400 грамм тăпăрч, 200 грамм хăйма, 50 грамм услам çу, 200 грамм сахăр, ванилин, 70 грамм астăрхан мăйăрě, 500 грамм кăпăрка печени, 2 апат кашăкě какао, 300 грамм иçěм çырли кирлě.**

Мăйăра блендерпа вěтетмелле. 200 грамм иçěм çырлине вěттěн касмалла.

Тăпăрча хăймапа, çемçе çупа, сахăрпа пăтратмалла. Çак хутăша икě пая уйăрмалла. Пěрне – какаопа, астăрхан мăйăрěпе, теприне вěтетнě иçěм çырлипе, ванилинпа хутăштармалла.

Ятарлă хут çине сěтпе йěпетнě печенин 1/3 пайне хумалла. Ăна ванилин кремěн 2/3 пайěпе витмелле. Ун çине юлнă печенин çурри сармалла. Каллех кашнине сěтпе йěпетмелле. Ку сийе шăккалат кремěпе хуплламалла. Печени хумалла. Торта çиелтен тата айккинчен юлнă кремпа сěрмелле. Ăна иçěм çырлипе илемлетмелле.

### Вěри бутерброд

**1 батон, шăратнă 100 грамм сыр, 100 грамм ветчина, 100 миллилитр шěвě хăйма, 20 грамм услам çу кирлě.**

Батон татăкěсен çиелти пайне шěвě хăймана чиксе кăлармалла. Сырпа ветчинана, услам çăва теркăламалла. Çак хутăша батон çине хумалла. Бутерброда 5-7 минутлăха духовкăна лартмалла.

## Усăллă канашсем



1 чей кашăкě апат соди хушсан кишěр, купăста, шалча пăрçи хăвăртрах писет.

Пăтратса кăпăклантарнă çěре чěптěм апат соди хушсан çăмарта хăпартăвě кăпăшкарах пулать.

Çулçăллă пахчаçимěçе тата çырлана апат соди хушнă шывпа çума çăмăлрах.

Килте майонез пěтнě-и? Ăна хăйма соусěпе улăштарма пулать. Пěçернě çăмарта саррипе шуррине уйăрмалла. Саррине вěтетсе хăймапа пăтратмалла. Унта 1/2 чей кашăкě сарпăрăç хушмалла.

Консервланă ананас е персик сиропěпе чăха маринадлама май пур. 2 апат кашăкě сиропа 2-шер апат кашăкě тип çупа, уксуспа хутăштармалла. Чăха çак маринадра 30 минут тытмалла.

Хăярăн тăварлă шывěпе пулă валли кляр тума пулать. 1 стакан тăварлă шыва 1 стакан çăнăхпа, 2 çăмартапа, 1 чей кашăкě майонезпа пăтратмалла. Юлашкинчен 1 апат кашăкě тип çу хушмалла.

## Хамăр тěллěн

# Килте шап-шурă юр...

Килти чăрăш çине юр çутăр-и? Е пÿлěме пас тытнă туратпа илемлетер-и?

Пенопластпа. Теркăланă пенопласта çилěмпе сěрнě чăрăш туратисем çине сапмалла. Унтан темěн тěрлě тетте çакмалла.

Тăварпа. Хими опычě ачашăн тěлěнтермěш пекех туйăнě. Тăвар хутăшне чернилпа, «зеленкăпа», апат-çимěç сăррипе сăрлама пулать.

Вěрекен 2 литр шыва 1 килограмм тăвар ямалла, ирěличчен кěтмелле. Унтан çак хутăша чăрăш тураттине чиксе кăлармалла. Типсен вăл пас тытнă пекех курăнě.

## Çăлтăрсен чěлхипе

# 2016 çулта мěн кěтет?

2016 çул – Вутлă Упăте çулталăкě. Ку чěрчун артистланма, вěçкěнленме ăста, туйăмлă-сисěмлě те. Кăмăлě те питě хăвăрт улшăнать унăн. Вăл ырă та хаваслă, çав вăхăтрах усал та хаяр. Çул çÿреме кăмăллать, илемлě ырăнсене килěштерет. Çавăнпах гороскоп Çěнě çулти ěç кунěсене те çутă, савăнăçлă, хăйне евěр пулăмсемпе пуянлатма сěнет. Йывăр лару-тăруран та упăте пек пăрăнса иртмелле.

Тухăç гороскопне ěненсен, Упăте хăтлă кил-çурта, çемье ăшшине килěштерет. Ку чěрчун – лайăх анне те, мăшăр та. Вăл ăшă хутшăнăва хаклама, упрама ăста, анчах унăн юнашар çирěп те шанчăклă çын пулнине туймалла. Хăвăрăн тепěр çурри тупрăр тăк çитес çул çемье çавăрма ăнăçлă иккене шута илěр.

**СУРĂХСЕМ** кěрлесе иртекен çулта такама темěн ăнлантарма, пурнăçра темскер улăштарма, çынсене хăйсен тěрěслěхне ěнентерме тăрăшнине пытараймěç. «Пурнăç еккипе авăнмалла мар, хăçан та пулсан вăл пирěн майлă çавăрăнать», текен ăнлавпа пурăннă тесен те йăнăш мар. Упăте сирěн тěнчекурăмăра улăштарě, хăлхаран: «Улшăнăва хăвăнран пуçла», – пăшăлтатě. Çакă ăнăçу вăрттăнлăхě те.

**ВĂКĂРСЕМ** 2015 çулта хăйсемшěн те, теприншěн те ыйту çине ыйту сÿтсе явса, чăрмавсене парăнтарса ывăнсах çитнě. Акă – тинех! – сире ырă улшăнусем кěтеççě. Çук, йывăрлăхсем тěппипех пěтмěç, анчах вěсем халě кăмăла уçаканнисем.

**ЙĚКĚРЕШСЕМ** пěтěмпех висме, иккěленме, шайлашу тупма хăнăхнă. Çакă чылай чухне ăнăçу кÿрет те. Çитес çулхи гороскоп сире çирěпрех пулма сěнет. Тěллев патне хастартарах утмалла.

**РАК.** Тепěр чухне шухăшăр çинче çирěп тăрăр. Шăпах лăпкăлăхпа çирěплěх ěçре, юратура пулăшěç.



**АРĂСЛАНСЕМ** ыттисене хăйсем пирки лайăх çеç шухăшлаттарма ăста. Анчах çитес çул сирěн ума пачах урăх тěллев лартать: çын умěнче «маттур» ята сăмахпа мар, ěçпе хысăла чакни малалла çěмěрсе талпăннинчен, чăн та, аванрах. Анчах 2016 çулта мар. Хăвăр тивěçмелле. Тÿрě кăмăллăрах, уçăрах пулма тăрăшăр. Маска айěнче хупланакан чăн сăнăр çынсен кăмăлне ытларах та кайě.

**ХĚРСЕН** юлашки çулсенче пурнăçěнче сахал мар улшăну пулса иртнě. Тепěр чухне чăтăмлăха тěрěслекеннисем те. Упăте çулталăкě çак тапхăра вěçлě. Эсир нумай вěçнě хыççăн çăлтăрсем патне тинех çитнě ракета пек. Анчах çак уçлăхра мěн тумалла-ха халě? Упăте сире мěн шухăшланине пурне те тума май парать.

**ТАРАСАСЕМ** иртекен çул хăйсене алăра тытма тăрăшни куçкěретех. Йăл кулăрпа сисěмлě-туйăмлă тăванăрсене путмасăр малалла ишме пулăшнă эсир. Упăте çакна асăрханах, çавăнпа тав тăвě те – лăпкăлăх парнелě.

**СКОРПИОНСЕМШĚН** çитес çул улшăнусемпе пуян. Мěн пытармалли пур, 2015 çул йывăрлăхсемпе ывăнтарса çитернě сире, вěсен вěçě-хěрри те пулас çук пек туйăннă. Ан кулянăр. Сирěн «пěтěмпех улăштарас» килекен ěмěтěр çитес çул пурнăçланатех.

**УХĂÇĂСЕМ,** пурнăçра яланах оптимистла тата авантюристла пурăнаксем, яланхиллех вăйлă та хастар. Вутлă Упăте те çак кăмăл-туйăмăра упрě. Вăй хумалли, яваплăха туймалли ěçсем те пулěçха, вěсем те сире пурнăçа ытларах юратма хистěç.

**ТУ КАЧАКИСЕМ** тěрлě енлě аталаннă çынсем. Май пур чухне чунран савăнса-кулса канма та, хăйсене алла илсе пěлтерěшлě ěçсене хăвăрт та тěплě тума та пěлеççě. Упăте сирěнтен иккěмěшне кěтет-тěр, çавăнпах кăткăс ыйтсем те «парнелě». Ан кулянăр. Эсир хăвăра вăйлăрах, хастартарах, телейлěрех тăвакан ăсталăх çеç пухăр.

**ШЫВТĂКАНСЕМ** ахалех те пултаруллă та хастар. 2016 çул вара уйрăмах ăнăçлă килě. Хăвăр тăрăшулăхăра пулах ěçре чылай мала кайма май килě. Пултарулăх иксěлми тапса тăнăран тепěр чухне: «Мěн туса хутăм-ши?» тесе пěрре мар пуç çěмěрěр. Темех мар. Чи кирли – вăй-халăра ан таптăр, ан питěрěр. Вăл сирěн ăнăçу уççи.

**ПУЛĂСЕН** çитес çул вăй-хал тапса тăрě. Хÿрепе пěрре сулса тахçанах ěмěтленнине пурнăçа кěртме майсем пулěç. Пурнăçа пач тепěр май улăштарас шанчăк та пысăк. Çак ăнăçăва кусран çеç ан вěçертěр.

АСАМЛĂХ ТĔНЧИ

# Тĕлпулăва чĕнессе кĕтнĕ

«Асамлăха ĕненетĕн-и?» – ыйтаççĕ кирек хăш ÿсĕмри çынран. Пĕчĕк чухне Хĕл Мучирен парне кĕтеттĕм. Чунра савăнăçлăччĕ. Чăрăш тавра юрласа çаврăннинче те юмах сĕмĕ пурах. Елкăна каймашкăн чылай малтан хатĕрленме пуçлаттăмăр. Йăлтăр-ялтăр çи-пуç тăхăнсанах асамлă сăнарсен тĕнчине лекнĕнех туйăнатчĕ. Йĕри-таврари халăхăн кăмăлне çĕклеме май тупакан Хĕл Мучин хăвачĕ, паллах, иксĕлми! Урăхла пулма та пултараймасть! Вăл пирĕн ĕмĕте çитерме тăрăшать.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ. Çемье çавăртăм, ачасем çуралчĕç. Анчах юратнă мăшăрăмпа телей курса пурăнма пÿрмен мана. Вăл пирĕнпе юнашар мар, урăх килте хăтлăх тупрĕ. Тĕрĕссипе, каялла таврăнасшăнччĕ – хам ирĕк памарăм. Урăх хĕрарăмсемпе вырăн ăшăтакан арçынпа канлĕ пурăнăн-и? Çĕрĕпе кĕтес килмерĕ ăна. Эпĕ канăç çухатнă вăхăтра вăл теприн ытамĕнче çемйи çинчен маннине чун йышăнасшăн пулмарĕ. Уншăн куççуль юхтармаллаччĕ-и манăн? Каçараймарăм, çавăнпах уйрăлтăмăр унпа.

Ĕçрен – киле, килтен – ĕçе çÿренине хăнăхрăм ĕнтĕ. Хуçалăха тытса пымашкăн ачасем пулăшма пуçларĕç. Выльăх та пăхаççĕ, апат та пĕçереççĕ, пÿлĕмсене те тирпейлеççĕ вĕсем. Çапах пурнăçра темĕн çитменни канăç памарĕ мана. Тем тесен те çыннăн хăйĕн ĕмĕрне мăшăрлă пурăнса ирттермелле. Çемье çĕнĕрен çавăрма палăртрăм.

Çĕнĕ çул уявĕнче шампань эрехĕ çĕклесе хамăн малтанхи савнипе пĕрле пулма ĕмĕтлентĕм. Вăл та арăмĕнчен уйрăлни çинчен илтнĕччĕ. Хулара тĕпленнĕскерне чылай вăхăт курман. Чим, ман çинчен пĕрре те пулсан аса илнĕ-ши çамрăк чухнехи юлташăм? Тен, хăйĕн чĕринчен яланлăхах кăларса пăрахнă вăл мана? Пурпĕрех хăçан та пулсан унпа тĕлпулас шанăça çухатмарăм.

Мĕн тетĕр? Нумай та вăхăт иртмерĕ – хайхискер пирĕн ял çынни урлă салам каласа ячĕ. Шухăшлăр-ха – асамлăх мар-и çакă? Темиçе çул пĕр-пĕринпе хутшăнман, апла пулин те ман çинчен манман вăл! Кайран телефонпа шăнкăравларĕ. Чылайччен калаçрăмăр, пĕр-пĕриншĕн тунсăхласа çитнине ăнланса илтĕмĕр. Манăн кăмăл улшăннине ачасем те тÿрех сисрĕç. Теприхинче тĕлпулăва чĕнсен, паллах, хирĕçлеймерĕм. Эпĕ çак саманта тахçантанпах кĕтнĕ.

Кафере чылайччен лартăмăр. Эпир иксĕмĕр ахальтен мар курнăçни çинчен сăмах пуçартăм. Никам та мар, шăпах Хĕл Мучи тĕлпултарчĕ пире. Çакна ĕненмесĕр май çук.

Хĕр чухнехи пекех телейлĕ эпĕ. Пĕтĕм тĕнче, чăнах, юрату çинче тытăнса тăрать. Çакна никамран лайăх пĕлетĕп. Асамлăха ĕненĕр, туссем! Вара пирĕн пурнăç та йĕркеленет.

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**



КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Чун сивĕнсен...

Сăмахăма Роза Сабитовăн «Упăшка шырани – ĕç шыранипе пĕрех» статьяна вуланă хыççăн сире хамăн шухăшсене çырса пĕлтерес терĕм.

Эпĕ Чăваш çĕршывĕнчех çуралса ÿснĕ. Çапах та хальхи вăхăтра тăван кĕтесĕмрен аякра пурăнатăп пулсан та «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата мана тăвансем почтăпа ярса параççĕ. Эпĕ ăна алла илсенех пĕр йĕрке хăвармасăр вуласа тухатăп. Тепĕр номерне чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Унта кăсăклă, халиччен пурнăçра тĕлпулман пулăмсене те вуласа пĕлме май пур.

Малалла – хамăн пурнăç, шăпам çинчен.

Салтак тивĕçĕсене пурнăçланă хыççăн тăван яла таврăнтăм. Кăштахран ĕçе вырнаçрăм. Пĕр çулхине хамăн тус-хĕрпе Настьăпа пĕрлешсе çемье чăмăртама шухăшларăмăр. Эпĕ кану вăхăчĕ илсе яла килтĕм. Настя ун чухне вĕренетчĕ, вăл та мана курма çитрĕ. Çав кунсенче хаваслă туй кĕрлеттертĕмĕр, çамрăксемпе юрларăмăр, ташларăмăр.

Виçĕ кунран каллех уйрăлтăмăр. Эпĕ ĕçе васкарăм, вăл – вĕренме. Каярах ăна эпĕ хам пата, аякка, илсе кайрăм. Анчах та ман патăмра ăна пурнăç тивĕçтермерĕ пулас. Пĕрмай темĕн килĕшместчĕ ăна, нăйăлтататчĕ: кутăнлашатчĕ, çакă ман кăмăлăма каймастчĕ. Çине тăрсах манăн çĕнĕ арăм: «Анне патне каятăп», – теме пуçларĕ. Тепĕр çултан пирĕн ача çуралчĕ. Пепке чупакан пулсан вăл каялла ман пата килчĕ. Чун сивĕнме ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ, каялла йышăнмарăм, тăванĕсем ÿкĕтленине те ăша хывмарăм. Тепĕр хутчен качча тухас килнĕ-мĕн унăн. Маларах мĕн шухăшланă-ши çав хĕрарăм, мăшăр çумĕнче пурнăç çапла тутлă çав вăл.

Вăхăт хăвăрт шăвать. Вун тăватă çултан яла таврăнтăм. Кану вăхăтне ирттерме. Арăм пулнăскерпе курса калаçас шухăш та пурччĕ. Анчах вăл манран уйрăлмасăрах тепĕр мăшăр тупнă.

Пĕр кунхине чÿречерен урамалла пăхрăм та, ман мăшăр пулнă хĕрарăм хăйĕн çĕнĕ упăшкипе ыталансах, пĕр-пĕрне куçран пăхса урампа иртсе пынине куртăм. Тĕлпулса калаçас ĕмĕтĕме чунра шаларах пытарса хутăм. Вăл ирĕклĕхе туйса хăйĕн иккĕмĕш мăшăрне те икĕ хутчен качча тухнă. Уншăн качча каясси ĕç шырассинчен те ансатрах пулас.

Çапла вăл хĕрарăм тени. Паллах, пурте пĕрешкел мар. Вăл манăн та, теприн те пурлăхĕ пулма пултарать. Хĕрарăм ирĕклĕхне никам та туртса илеймест. Пите çеç мĕнпе те пулин хупламалла: вăтанма п.лмелле? Çапла вĕçлерĕ куçакан пурлăхăн пĕрремĕш хуçи пулнă юлташăм хăйĕн сăмахне.

**Калаçăва çырса илекенĕ**
**В.ВАНЮКОВ.**

ÇАМРĂКЛĂХ

# Шурă пĕркенчĕклĕ Шура

Вылять, кулать Çĕнĕ çул. Кашнине савăнăç, телей, тĕрлĕ тĕлĕнтермĕш парнелеме васкать вăл.

Уяв каçĕнче, çур çĕр иртсен, хулари пĕр общежитири çамрăксен ушкăнĕ урамри капăр чăрăш тавра ташласа-юрласа савăнчĕ. Хаваслă йышран икĕ тус – Шурăпа Эльвира та – юлмарĕç. Асамлă каçра шÿт-кулă сахал мар, паллах. Ав, инçе те мар, ачасен пăрлă тăвайккине çитĕннисем «ярса илнĕ» те çурăмпа, хырăмпа ярăнса çухăраççĕ кăна. Ача-пăча пекех телейлĕн çуйăхаççĕ пиччесемпе аппасем.

Сăрт пушансан Шурăпа Эльвира иккĕшех ирĕккĕн ярăнчĕç. Хытă хут çине ларса пăр çийĕн вирхĕнекен Шура умĕнче кĕтментуман çĕртен яштака çамрăк иртсе пыни курăнчĕ. Вăл пăрăнса ĕлкĕреймерĕ, пысăк хăвăртлăхлă хĕр ăна вирлĕн пырса тăнклаттарчĕ. Палт! йăванса кайрĕ хура курткăллăскер. Аллинчи çатăркка хутаçĕ айккинелле вăркăнчĕ. Çамрăк çын тăма васкамарĕ. Хĕре кăшт шиклентерчĕ çакă. Янклаттарса ярĕ тата тесе çывăхне пыма та аптăрарĕ вăл. Вара юлташĕсем патнелле çаврăнса утрĕ.

– Çĕнĕ çул ячĕпе, Юр пике. Хĕл Мучи шырамастăн-и? – илтĕнчĕ хыçра хулăн сасă.

Шура çаврăнчĕ. Унăн умĕнче шап-шурă юрлă, йăл кулăллă хаваслă çамрăк тăрать.

– Сухаллине ăсатрăмăр ĕнтĕ, санăн вара шăрт кăна шăтнă-ха, – кампа юптарнине ăнланчĕ Юр пике.

Вĕсем пĕр-пĕрин çинчен куç илмесĕр ăшшăн шăкăлтатса тăнă самантра хĕрсемпе каччăсем чăрăш патĕнчен чупса çитрĕç те Шурăсене сырса илсе карталанса çаврăнчĕç. «Çĕнĕ ĕмĕт, Çĕнĕ çул, пирĕнпе выля та кул...» – янăратрĕç пурте.

Кайран çамрăксем общежитире уяв сĕтелĕ хушшине татах пухăнчĕç. Урамра уçăлса çÿренĕ хыççăн Шурăпа Саша та пĕрле хавасланчĕç вĕсемпе. Чылайăшĕ çав каç иккĕшĕн пурнăçĕнче ĕмĕрлĕхе асра юласса ĕненчĕ. Чăн та, йăнăшмарĕç çутă ĕмĕтлисем. Çулталăкран Шура шурă пĕркенчĕк тăхăнчĕ. Сашăпа иккĕшĕ тăван-хурăнташа пухса вăйлă туй кĕрлеттерчĕç. Телейлĕ çемьен тулăх кĕреки халĕ те хăнасенчен таталмасть.

**А.АВДЕЕВА.**

ШĂПА

# Ăнсăртран мар

Иртнĕ çул раштавăн 31-мĕшĕнче те ытти ахаль кунри пек касченех ĕçлеме тивнĕччĕ. Тепĕр тесен ăçта васкамалла ман? Шăллăм çемье çавăрнă хыççăн анне пĕччен мар, çавăнпа та яла каяс темерĕм. Уяв сĕтелне вуникĕ сехетчен хатĕрлеме вăхăт пур-ха, килте çавах никам та кĕтекен çук. Лапка-лапка юр çăватчĕ, ĕçрен тухсан васкамасăр хула урамĕпе утрăм. Апат-çимĕç туянма çула май çывăхри лавккана кĕтĕм. Пысăк черетчĕ. Эпĕ вара мандарин та, шампань эрехĕ те туянма ĕлкĕреймен. Çынсен хушшинче хĕсĕнкелесе тăнă хушăра такам мана çурăмран тĕкрĕ. Ăнсăртран лекрĕç пулĕ тесе çаврăнса та пăхмарăм. Тăрук пĕрле вĕреннĕ юлташ пырса тăчĕ ума. Вăл та тин ĕçрен тухнă-мĕн. Уяв сĕтелĕ пушă ан пултăр тесе лавккана апат-çимĕç туянма кĕнĕ. Мăшăрĕ теприпе явăçса Мускава тухса кайнă хыççăн пĕччен пурăнать Саша. Черетре пĕр сехет ытла та тăтăмăр пулĕ. Пĕрмай йăл çиçекен ырă кăмăллă вахтершăна, яланах тута тăсса çÿрекен коменданта, слон пысăкăш Леня пăтăрмахĕсемпе шÿчĕсене аса илсе култăмăр. Пĕр-пĕрне тахçантанпах курманнипе калаçу çăмхи сÿтĕлчĕ те сÿтĕлчĕ. 11 сехет çывхарнине сисмен те. Эпĕ вара килте уяв салачĕ те хатĕрлемен, Сашăпа сывпуллашса хăвăртрах киле утас терĕм. «Тăхта, леççе хăваратăп, ĕлкĕреймĕн тата?» – тем çухатасла алран çатăрласах тытрĕ студент чухнехи тусăм. Машинăпа çил пек пирĕн еннелле вĕçтертĕмĕр. «Эсĕ хăш çуртĕнче пурăнатăн, эпĕ ак çак çĕннинче», – ман пÿрт еннелле пÿрнипе тĕллерĕ Саша. «Ан тĕлĕнтер, эпĕ те унтах», – терĕм. Çитменнине тата ман подъездрах-мĕн. Вăл вунпĕрмĕш хутра, эпĕ – иккĕмĕшĕнче. Çулталăк пĕр çуртра пурăнса пĕр-пĕрне халĕччен те курманни мана та, ăна та питĕ тĕлĕнтерчĕ. Вăт, хула те, пĕр алăкранах кашни кун кĕрсе-тухса çÿретпĕр, ăçта кам пурăннине те пĕлместпĕр. «Айта Çĕнĕ çула пĕрле кĕтсе илетпĕр», – терĕ Саша.

Ку пурнăçра нимĕн те ăнсăртран мар иккен. Турă хушнинчен иртеймĕн тесе ахальтен каламаççĕ пуль. Çĕнĕ çула яла каймаллаччĕ ман – чун туртмарĕ. Ĕçрен пăртак маларах тухса утма та пулатчĕ – çынсемпе танах ларас терĕм. Апат-çимĕçне те юлашки куна хăвармасса пултарнă-çке. Шăпа-ши?

Нумай пулмасть эпĕ вунпĕрмĕш хута пурăнма куçрăм. Тусăм мана венчет çĕрри парнелерĕ. Сашăн куçĕсем малтанхи пек тунсăхлă мар халь. Кăçал иртнĕ çулти пек 31-мĕшĕнче ĕçлеместпĕр. Черетре те тăмалла мар, мандаринне те, шампань эрехне, ытти апат-çимĕçне те Çĕнĕ çул валли туянса хунă. Симĕс чăрăша та Саша мансăрах капăрлатнă.

**АЛЕНА.**
Шупашкар хули.



ÇĔНĔ ÇУЛ МЫСКАРИ

# Мунчари Юр пикесем

Çĕнĕ çула кĕтсе илме яла каяс терĕм. Хăнана, упăшкам патне. Вăл ялта пурăнать, кроликсем усрать, кил-çурта сыхлать. Эпĕ канмалли кунсенче çеç кайкаласа килетĕп. Манăн ачасене, мăнуксене пулăшмалла-çке. Вĕсене, паллах, хамран ытла пенси укçи кирлĕрех. Ашшĕ ялта пурăнать те, унран «спрос» сахалрах. Ăна хăйĕн укçи ĕçсе-çисе, саркаланса пурăнма чухах. Сахалрах курни пĕр енчен аван та: упăшкасăр пурăнма лăпкăрах. Ĕлĕкрех, çамрăк чухне, хваттерте кашăк-чашăк шăкăртататчĕ кăна мар, турилккесем те пуç урлă вĕçетчĕç. Халĕ час-часах шăнкăравлать: «Эсĕ пĕçернĕ апата çиес килекен пулчĕ. Хăçан килетĕн?» – тесе йăлăнать. Эп ухмах та мар, чееленме тытăнатăп: «Аюк! Укçа çук. Кăмăл çук», – тетĕп. «Тавай, кил! Кĕçĕрех такси тытса кил! Укçине хам тӳлетĕп!» – тет. Ну, тӳрех пĕлтĕм, киккирикĕ хĕрнĕ кун. Ун пек чухне, чăнах та, нимĕн те шеллемест. Эпĕ яла пырсан-и? Эй, пуçланать, йӳçĕ ĕçетпĕр, тутлă çиетпĕр, пылаккăн калаçатпăр. Тем пулать, çавăнтах вăрçса каятпăр, кĕç мирлешетпĕр. Хăш чухне ача шухăш кĕрсе каять-ши, пытанмалла вылятпăр. Эпĕ унран тарса лупасай тăррине хăпарса каятăп, ырă шăршă кĕрекен утă ăшне пытанатăп. Вăл мана шырать... «Эх, ĕлĕк çакăн пек телейлĕ пулнине астумастăп», – мана хăлхаран пăшăлтатать. «Калаçăн та. Ун чухне ачасем вĕтĕ, хамăр çамрăк. Пурнăçĕ çитмен», – тетĕп. Çултапăкра пĕрре, Çĕнĕ çул парнипе, ачасене канфетпа пĕрле шăп та лăп икĕ мандарин хурса паратчĕç. Пӳтене çăмартинчен кăшт çеç пысăкрахчĕ вĕсем. Ачасем ăна чăрăш айне пытарса хуратчĕç. Çĕнĕ çул каçĕ ашшĕ Хĕл Мучи пулса кĕретчĕ, пуçланатчĕ шăв-шав... Мандаринне кашнине пĕр пек пайлаттăмăр. Эх, шăрши!

Халĕ-и? Темшĕн халь аплах тутлă мар пек. Халĕ ялта пурăнакан старик, хĕрлĕ сăмсаллă Хĕл Мучи, хура вăлча, хĕрлĕ пулă, ветчина çеç кĕтсе ларать. Яка пыр. А мана мĕн? Укçине парать вĕт. Эпĕ пынă çĕре кролик ăшаласа хурать, чей вĕретет, мунча хутать. Милĕкĕсем çĕнĕ. Ялта пирĕн нӳхреп тулли хăяр, кăмпа, панулми. Чăхсем халĕ те çăмарта тăваççĕ, шик шăхăрсах пурăнма пулать. Ĕçлеме кăна ан ӳркен. Эпир, чăвашсем, ĕç тесен апат çинчен те манса каятпăр. Ак каллех кĕсье телефонĕ шăнкăртатать. Мана каллех яла чĕнет пулĕ-ха. О, Николай Карлин юррипе астарать:

Сивĕ хĕл каçĕ, сивĕ хĕл каçĕ
Сивĕтеймест пире-е-е,
Эс юратсассăн, эп юратсассăн
Пулăпăр-ха пĕрле-е-е, – тет.

Артист тейĕн. Юрă тесен каçсах каятьçке.

– Çĕнĕ çул сăмса умĕнчех, мĕн пустуй пырса чăрманса çӳрес? – терĕм. Ăнланчĕ. Тек юрларĕ. Тем мăкăртаткаласа илчĕ те – шарламарĕ.

Тепĕр темиçе кунран яла пуçтарăнтăм. Вокзалта халăх, кукăль ăшĕ пек нумай. Малтан Çĕрпӳ хулине çитмелле, унтан татах урăх автобуса кĕтмелле. Аран-аран тапаланса кĕрсе лартăм тулли сумкăсемпе. Чисти кулăшри пекех: ăçта каять ку халăх, эпĕ хуть тăван яла каятăп-ха. Кĕрсе ларсан лăштах пултăм. Тинех чун лăпланчĕ. Киле çитиччен утмалăх пур-ха, шоссе тăрăх пĕр-икĕ çухрăм танккамалла. Ну, ку темех мар. Хăнăхнă. Ав таçтанах çутăсем курăнаççĕ, унта-кунта. Пырса кĕтĕм. Кил хушшинче чăрăш йăлкăшса ларать. Ĕлĕкхи теттесене, юрать-ха, кăларса пăрахман, халь тем пек паха: упа, тилĕ, пулă, кишĕр, сысна... Мĕн кăна çук! Кăмăл çĕкленсе кайрĕ. Юрне хырса тасатнă, пусма вĕçĕсем çап-çутă. Йывăр сумкăсене лартрăм. Ух, тарларăм иккен. Сывлăш çавăрма тесе кăштах тăхтарăм-ха. Пӳрте кĕме васкамарăм. Таçта йытă улать. Мунча шăрши кĕрет. Çĕнĕ çул мунчи хутса хунă пулас-ха. Маттур. Тухса пăхас, эппин, пахчана. Çан-çурăм çӳçенет тарланă хыççăн. Хăвăртрах мунчана кайсан та юрать? Тем, мунчаран шăв-шав илтĕнет тата. Ку мĕне пĕлтерет-ши? Сисчĕвлентĕм, хуллен утса пытăм. Пăхатăп вăрттăн алăк хушăкĕнчен – хытса тăтăм.

Манăн мăшăрăм мунча алăкĕ умĕнче тилĕ пек явкаланать. Хăй Хĕл Мучи тумне тăхăннă, çăмламас çĕлĕкпе. Янахĕ айĕнче тем вăрăмăш шур сухал çакса янă. Пĕр аллинче çур литр кĕленчи, тепринче – турилккепе саккуски.

– Эй, мунчари Юр пикесем?! Сирĕн пата кĕме юратчĕ-ши? Ку – эпĕ. Хĕл Мучи! – тет.

Лĕштĕрр! вăй пĕтсе кайрĕ манăн. Кĕçех çĕре лĕнчĕртететтĕм, тепле тытăнса юлтăм ура çинче. Чĕре карт-карт! сикет. Эй, çырлахах.

– Çук! Çук! Юрамасть, – çуйăхаççĕ шалта.

– Кĕрсе кайрăм вăрмана,
Лартăм тунката çине,
Уçса пăхрăм кĕпене...
Ăнна тăри-аппарат!
Эй! Çурăм çума кĕрес-и? Мĕн тетĕр?
– Эп сана-а, каççерен кĕтетĕп,

Савнă Оксана-а-а, – çаплах юрлать манăн арçынкка. Пĕтрĕ пуç! Эпĕ çуккипе мĕнле усă курма шутланă ку?

– Вçо-тăки пĕрер черкке ĕçетĕр-и? Э? – кăшкăрать татах хăй. – Çĕнĕ çул çитиччен атьăр-ха кивĕ çула ăсататпăр, тевочки?!

– Вĕри шывпа чашлаттаратпăр ак, – илтĕнет мунчаран. Эй, хихиклетеççĕ-ĕ, Тур çырлахах.

– Манăн сирĕн çине кă-ăшт анчах, хăрах куçпа та пулин, пăхас килет-çке! Аха-и?

Хам сисмесĕрех çатăрр! вĕриленсе кайрăм. Пуçран вут сыппипе çапнă пекех туйăнчĕ. Манпа мĕскер пулса иртнине халĕ астумастăп та уш. Мунча пӳртӳм алăккине ярр! уçса ятăм та тигр ами пек пĕррех сиксе лартăм Хĕл Мучи çине. Çавăнтах туртса антартăм...

– Хура-ах! Вĕлерме килчĕ-ĕç! – кăшкăрса ячĕ ку ăна-кăна кĕтменскер. – Хурах!

Çур литр кĕленчинчен эрехĕ палкаса юхса тухрĕ, турилкки ӳксе çĕмĕрĕлчĕ, кăлпасси татăкĕсем урайĕнче йăваннаççĕ.

Урса кайнăскер, пĕр шелсĕр ислететĕп.

– Пулăшă-ăр! Арăм вĕлерме килчĕ-ĕ! Ай! Пĕтерчĕ! Унтан ан тыт! Ай-яй!

Сасса илтсе мунчаран çара ӳтлĕ хĕрарăмсем кĕпĕртетсе тухрĕç, шап-шурă пăс мăкăрланать. Пĕри мунчалапа, тепри капрон тирĕкпе, виççĕмĕшĕ хурăн милĕкпе хупланнă. Нимĕн те ăнланмаççĕ, пурте çуйăхаççĕ. Ман арçын мана кĕске çӳçĕмрен ярса илчĕ те енчен-енне лăскать те лăскать. Хăлхинчен çыртса лартрăм. Тинех ячĕ, çӳçĕме тăпăлтарса юлчĕ.

– Чарăнăр! Пĕр-пĕрне вĕлеретĕр! – кăшкăраççĕ хĕрарăмсем. Сассисем палланăскерсемех-ха. Тăруках ăнкарса та илеймерĕм. Пуçа хыпашласа пăхрăм – хурах кăшкăрса макăрса ятăм. Унччен те пулмарĕ, мана такам ĕнсерен çĕклесе тăратрĕ.

– Хорош, на!.. – илтĕнчĕ хулăн сасă. Пăхрăм та – Леонид кум тăра парать. Эпĕ тата хытăрах ӳлесе йĕрсе ятăм.

– Воспăти! Ай-уй, Юля кумма, эсех-и ку? Мĕн пулнă сана?

Çӳçе-пуçа айккинелле сăтăркалатăп, Оксана куммана палласа илтĕм. Вăл çара ӳтне халачĕпе хупланă. Куçĕ чарăлнă.

– Ну-кă, марш! мунчана, – терĕ вăл хăраса ӳкнĕ кинĕпе мăнукне. – Нечевă кунта шăнса тăма. Кĕрĕр! Лапка тăрне хăпарса ларăр!

Вĕсем мунчана кĕрсе кайрĕç. Ман этем урайĕнче упаленет. Леонид кум пирус туртса ячĕ. Хĕл Мучие тăма пулăшать.

– Кумма-а, ара, сана кĕтсе халтан кайрăмăр, кинĕмпе мăнукăмпа мунчана кĕтĕмĕр ĕнтĕ. Вара эсĕ ма унашкалах...

– Эй-яй-яй! – ӳлетĕп эпĕ, ниçта кайса кĕрейми намăсланса. – Каçарăр мана, ухмаха. Мĕскер пулса тухрĕ манпа – пĕлместĕп.

– Санăн манран каçару ыйтмалла! – ыратакан хăлхине хыпашлать кил хуçи.

Унтан вăрăм шурă сухалне, Хĕл Мучи калпакне хывса çатлаттарчĕ.

– Халĕ те кĕвĕçме пăрахмастăн. Тьху! Анра-сухра! Тăм писмен! Леонид кум, ярса пар-ха пĕр черкке. «Кавна» хĕрарăмми!..

Сăмсана нăшш! туртатăп. Ниепле те лăпланаймастăп. Хама тем туса хураттăм.

– Хирĕçме кирлĕ мар, юлташсем, – терĕ Леонид кум. – Çĕнĕ çул çитет. Тавай, пĕрер черкке ĕçер те – иртсе кайтăр. Мирлешĕр.

Пирĕн кумсем кӳршĕрех пурăнаççĕ. Мускава ĕçлеме кайнăскерсем Çĕнĕ çул кĕтсе илме яла таврăннă иккен. Арçынсем малараx кĕрсе тухнă, мунчана хĕрарăмсем кайнă. Ман арçыннăн илан юрламалла, мунчара та пулин хĕрарăмсене юрăпа илĕртет. Эпĕ вара... Эпĕ тăр ухмах хĕрарăм. Тупнă кама кĕвĕçмелли. Хамран хам кулсах вилмелле.

Пĕрер черкке ĕçнĕ хыççăн пурте лăпланса çитрĕмĕр. Хĕл Мучин те кăмăлĕ çаврăнса кайрĕ пулас. Ытларах манран кулчĕç паллах. Кумма мана вăйпах мунчана сĕтĕрсе кĕрсе кайрĕ, хывăнтарчĕ. Пĕр ӳпкелерĕ, пĕр шеллерĕ, ятларĕ те ĕнтĕ.

– Ленечка, кăвакал илсе кил, – хушрĕ вăл. – Эпир куммушкăпа пĕрер çапăнар унччен. Çĕнĕ çул мунчи кĕмелле вĕт.

– Юрать! – илтĕнет Леонид кум сасси.

– Эпĕ кролик ăшалама лартам эппин, – тет ман арçын. – Вĕрилле тутлă вăл. Ай, шуйттан хăлхи, ыратма чарăнмасть-ха.

Кумма мана çапса ячĕ, çурăма сĕрсе ячĕ. Тĕрĕссипе, ман çапăçнипе вăй та çукчĕ. Мунчаран тухнă çĕре сĕтел çинче кролик пăсланатчĕ, кăвакалĕ тата сĕтеле пуянлатрĕ. Мĕн кăна çук унта. Арçынсем пирĕнсĕрех сĕтел хатĕрлесе лартнă.

Çапах та хăйне май интереслĕ те мыскараллă каç пулчĕ ку пуриншĕн те. Паллах, пурин асĕнче те юлать ун пекки. Пĕрре те начар пулмарĕ пире. Упăшкана шеллерĕм ĕнтĕ. Пустуй патак çитертĕм. Хам кĕçех çӳçсĕр юлаттăм. Юрать кумсем пулчĕç. Шампань эрехĕ пуçа кайрĕ те пурин çинчен те манса кайнă эпир. Кил хушшинчи асамлă чăрăш тавра ирчченех ташланă. Такмаксем каласа. Хĕл Мучи патне пырса ачашлантăм та, каçару ыйтрăм та – пулчĕ те. Унăн ыратни те иртсе кайнă. Усал çын мар вăл манăн. Чунĕ ырă, кăмăлĕ лайăх. Музыка кĕрлет. Хĕл Мучи пурне те ташлаттарать, хăй пĕр чарăнми сикет. Кумсен кинĕ – Юр пике, мăнукĕ – мулкачă. Эй, сикеççĕ, пурте хĕпĕртеççĕ. Çĕнĕ Çулпа сире, тусcем! Эсир те пĕрле савăнăр, кулăр!

Николай ЕРШОВ



ТАКМАКСЕМ




## Юратнă хаçата

Эпир «Чăваш хĕрарăмне»
Питех килĕштеретпĕр.
Чунăмăрсен пĕр парăмне
Унпа тивĕçтеретпĕр.

Алăсенчен ямасăрах
Ăна пĕрмай вулатпăр.
Вулавăша каймасăрах:
Килтех-çке çырăнатпăр.

Çак хаçата вуласанах
Чунтан-çке савăнатпăр.
«Тус-йышĕ пытăр хутшăнсах», –
Пĕр харăссăн калатпăр.

Шăматкунсем çитмессерен
Чӳречерен пăхатпăр.
Çӳрет ав почта килсерен:
«Мĕнле хаçат çырнатăр?»

Çыравçăсем пире валли
Çĕр-çĕр хайлав майлаççĕ.
Вĕсен сăвви-калавĕсем
Ыр туйăм хăвараççĕ.

Почтальонпа тĕл пулнă чух
Çумран иртсе ан кайăр.
Вăл тинкерсе йăл кулнă чух
Хаçат çырăнма ан манăр.

Красноармейски ялĕ.




## КĂРЛАЧ — ЯНВАРЬ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 4 | 11 | 18 | 25 | | ПН |
| ЫТ | | 5 | 12 | 19 | 26 | | ВТ |
| ЮН | | 6 | 13 | 20 | 27 | | СР |
| КÇ | | 7 | 14 | 21 | 28 | | ЧТ |
| ЭР | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | ПТ |
| ШМ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | | СБ |
| ВР | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | | ВС |

## НАРĂС — ФЕВРАЛЬ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | ПН |
| ЫТ | 2 | 9 | 16 | 23 | | | ВТ |
| ЮН | 3 | 10 | 17 | 24 | | | СР |
| КÇ | 4 | 11 | 18 | 25 | | | ЧТ |
| ЭР | 5 | 12 | 19 | 26 | | | ПТ |
| ШМ | 6 | 13 | 20 | 27 | | | СБ |
| ВР | 7 | 14 | 21 | 28 | | | ВС |

## ПУШ — МАРТ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 7 | 14 | 21 | 28 | | ПН |
| ЫТ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | ВТ |
| ЮН | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | | СР |
| КÇ | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | | ЧТ |
| ЭР | 4 | 11 | 18 | 25 | | | ПТ |
| ШМ | 5 | 12 | 19 | 26 | | | СБ |
| ВР | 6 | 13 | 20 | 27 | | | ВС |

## АКА — АПРЕЛЬ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 4 | 11 | 18 | 25 | | ПН |
| ЫТ | | 5 | 12 | 19 | 26 | | ВТ |
| ЮН | | 6 | 13 | 20 | 27 | | СР |
| КÇ | | 7 | 14 | 21 | 28 | | ЧТ |
| ЭР | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | ПТ |
| ШМ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | | СБ |
| ВР | 3 | 10 | 17 | 24 | | | ВС |

## ÇУ — МАЙ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | ПН |
| ЫТ | | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | ВТ |
| ЮН | | 4 | 11 | 18 | 25 | | СР |
| КÇ | | 5 | 12 | 19 | 26 | | ЧТ |
| ЭР | | 6 | 13 | 20 | 27 | | ПТ |
| ШМ | | 7 | 14 | 21 | 28 | | СБ |
| ВР | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | ВС |

## ÇĔРТМЕ — ИЮНЬ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 6 | 13 | 20 | 27 | | ПН |
| ЫТ | | 7 | 14 | 21 | 28 | | ВТ |
| ЮН | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | СР |
| КÇ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | | ЧТ |
| ЭР | 3 | 10 | 17 | 24 | | | ПТ |
| ШМ | 4 | 11 | 18 | 25 | | | СБ |
| ВР | 5 | 12 | 19 | 26 | | | ВС |

## УТĂ — ИЮЛЬ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 4 | 11 | 18 | 25 | | ПН |
| ЫТ | | 5 | 12 | 19 | 26 | | ВТ |
| ЮН | | 6 | 13 | 20 | 27 | | СР |
| КÇ | | 7 | 14 | 21 | 28 | | ЧТ |
| ЭР | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | ПТ |
| ШМ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | | СБ |
| ВР | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | | ВС |

## ÇУРЛА — АВГУСТ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | ПН |
| ЫТ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | | ВТ |
| ЮН | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | | СР |
| КÇ | 4 | 11 | 18 | 25 | | | ЧТ |
| ЭР | 5 | 12 | 19 | 26 | | | ПТ |
| ШМ | 6 | 13 | 20 | 27 | | | СБ |
| ВР | 7 | 14 | 21 | 28 | | | ВС |

## АВĂН — СЕНТЯБРЬ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 5 | 12 | 19 | 26 | | ПН |
| ЫТ | | 6 | 13 | 20 | 27 | | ВТ |
| ЮН | | 7 | 14 | 21 | 28 | | СР |
| КÇ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | ЧТ |
| ЭР | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | | ПТ |
| ШМ | 3 | 10 | 17 | 24 | | | СБ |
| ВР | 4 | 11 | 18 | 25 | | | ВС |

## ЮПА — ОКТЯБРЬ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | ПН |
| ЫТ | | 4 | 11 | 16 | 25 | | ВТ |
| ЮН | | 5 | 12 | 19 | 26 | | СР |
| КÇ | | 6 | 13 | 20 | 27 | | ЧТ |
| ЭР | | 7 | 14 | 21 | 28 | | ПТ |
| ШМ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | СБ |
| ВР | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | | ВС |

## ЧӲК — НОЯБРЬ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 7 | 14 | 21 | 28 | | ПН |
| ЫТ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | ВТ |
| ЮН | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | | СР |
| КÇ | 3 | 10 | 17 | 24 | | | ЧТ |
| ЭР | 4 | 11 | 18 | 25 | | | ПТ |
| ШМ | 5 | 12 | 19 | 26 | | | СБ |
| ВР | 6 | 13 | 20 | 27 | | | ВС |

## РАШТАВ — ДЕКАБРЬ

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 5 | 12 | 19 | 26 | | ПН |
| ЫТ | | 6 | 13 | 20 | 27 | | ВТ |
| ЮН | | 7 | 14 | 21 | 28 | | СР |
| КÇ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | | ЧТ |
| ЭР | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | | ПТ |
| ШМ | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 | | СБ |
| ВР | 4 | 11 | 18 | 25 | | | ВС |



– Хĕрачасем, Хĕл Мучи хыт кукар иккен!
– Мĕншĕн çапла калатăн?
– Вăл мана хăйĕн парнине илсе килсе парас вырăнне анне шкапа пытарса хунă пуканене тупнă та чăрăш айне хунă.

* * *

– Вовочка, ӳссен эсĕ кам пуласшăн?
– Хĕл Мучи.
– Мĕншĕн?
– Мĕн япăххи вара? Эрне ĕçлетĕн те – çулталӑк тăршшĕпех канатăн!

* * *

– Ывăлăм, кунашкал усал сăмаха кам вĕрентрĕ?
– Хĕл Мучи, анне. Вăл ăна ирхине ман велосипедран такăнсан каларĕ.

* * *

Кăрлачăн 1-мĕшĕ. Тантăшĕ шăнкăравлать:
– Галя, Çĕнĕ çула мĕнле кĕтсе илтĕн?
– А-а-а, яланхи пекех, вырăн çинче.
– Халăх нумайччĕ-и?

* * *

Çĕнĕ çул каçхине урăлтаркăча 50 çынна тата 14 Юр Кĕлеткене илсе килнĕ. Полицисем çав каç мĕншĕн йăнăшнине тĕпчеççĕ халь.

* * *

Çĕнĕ çулхи корпоратив хыççăн:
– Чунăм, ан çухăраш. Йăлтах каласа паратăп: эпĕ ĕçмен, арçынсемпе чуптуман, çинĕ, ташланă, çавă çеç. Ыйтусем пур-и?
– Кĕпӳ ăçта сан?

* * *

– Хаклă Раççей хĕрарăмĕсем! Хĕл Мучирен кашни çулах арçын ыйтса çитет пуль сире!
– Ахаль те çур Таджикистанпа ытти союз республикисем куçса килчĕç пирĕн пата.

* * *

– Вовочка, мĕншĕн санăн юр пĕрчисем пурте симĕс тĕслĕ?
– Эпĕ вĕсене долларсенчен касса кăлартăм.

* * *

Икĕ ӳсĕр арçын калаçаççĕ:
– Эсĕ мĕншĕн Хĕл Мучине сухалĕнчен туртрăн?
– Чăн-чăнах-ши тесе тĕрĕслесе пăхма шухăшларăм.
– Ну, мĕнле вара?
– Чăн-чăнниех пулса тухрĕ. Халь унпа мĕн тумаллине те пĕлместĕп.

**☺И-ХИ-ХИК☺**

* * *

Кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕ. Каçхи апат çиме тăмалла пуль.

* * *

Хаклă хĕрарăмсем! Хĕл Мучирен нихăçан та юмахри пурнăç ан ыйтăр – принцессăна пурпĕрех çавăрмĕ, ухмах Йăванпа вара тĕл пултаратех.

* * *

Çĕнĕ çул каçхине амăшĕ пĕчĕк ывăлне çывăрма ӳкĕтлет:
– Кур-ха, ав телевизорти аппасем те хывăнма пуçларĕç.

* * *

Шăнкăрав. Алăк урати умĕнче Хĕл Мучи тăрать. Пĕчĕк арçын ача хаваслăн кăшкăрать:
– Сывă-и, Хĕл Мучи! Эсĕ парне...
– Арçын ачи, кĕнĕ-кĕмен парне ан ыйт-ха! Штопор пур-и?

* * *

– Хĕл Мучи, парнешĕн тав сана.
– Темех мар, уншăн тав тумасан та.
Эпĕ те çапла шухăшлатăп çав, анне «спаçипă» теме ыйтрĕ.

* * *

Ача садĕнчи Çĕнĕ çул хыççăн ашшĕ ывăлне калать:
– Ывăлăм, эсĕ пысăк ĕнтĕ, санăн пĕлмеллех, нимле Хĕл Мучи те çук. Утренникри шур сухалли, хĕрлĕ калпакли эпĕччĕ.
– Эпĕ пĕлетĕп, атте. Аист та эсех вĕт!


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 27 руб., 9х20х40 – 23 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** ж□б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Работаем и в праздники.** Т. 8-967-470-46-77.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 89603016374.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич,** блоки. **Т. 89613393363.**

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**24.ГРАБЛИ, косилки**, сажалки, копалки, окучники, опрыскиватели, погрузчики, БДФ. **Низкие цены.** Доставка. Т. 8-927-853-35-96.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**33.КИРПИЧ** М125, М150; **керамблок.** Доставка. Т. 89033220208.

### ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**28.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

### ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев.** Т. 8-967-471-50-70.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8/8352/ 215345, 89199785855. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**745.Утепление домов ПЕНОИЗОЛОМ.** Гарантия. Скидки. Т.380373.

**750.**Веселая **тамада.** Т. 89373935779.

**837.Бурение скважин на воду.** Т. 8-906-381-60-37.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Порядочный, добрый, простой мужчина /40х170х70/, чуваш познакомится с доброй, умной, красивой женщиной от 26 до 42 лет. Т. 8-937-942-17-20.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на 7 этаже Дома печати.
Справки по телефонам: 28-83-70, 56-04-17.


# Уяв сăмах каçмăшĕ

**Владислав ПЛАТОНОВ**
**/Шупашкар районĕ/ хатĕрленĕ**



**Сылтăмалла:**

1. ... çине ĕне пусман-ха /калар./. 2. ... епле – йыш çапла /ват. сăм./. 5. Тимĕр йытăн ... хӳре /туп. юм./. /Йĕпе çип/. 6. Пару падежĕнчи местоимени. 8. Çемье пуçĕ. 9. ... – сухра. 11. ... ялан пĕр йĕрпе чупмасть /ват. сăм./. 12. Ăмăрту пуçламăшĕ. 15. Панулми сорчĕ. 16. Тырă кĕлечĕ. 18. Халăх комиссарĕн вырăсла ячĕ. 20. Пăтрашу. 22. Балкан çур утравĕнчи çĕршыв. 25. Ĕлĕкхи. 26. Шкул ачин хаçачĕ.

**Сулахаялла:**

1. Хĕлле шăтăкра ура тупанне çулласа выртакан. 3. Питĕ ăста летчике вырăсла мĕнле калаççĕ? 4. Италин тĕп хули. 7. Ăна хăмлапа вĕретеççĕ. 8. Çынна шан, ... тĕрĕслеме ан ман. 10. Йӳçĕ пахчаçимĕç. 11. Тăрăс-тăрăс тапарçи, ...ине хуçар-и? 13. Физкультурăпа туслашма пулăшать. 14. Литературăн пĕр жанрĕ. 17. Самолета кĕртсе лартмалли вырăн. 19. В.Ленин, А.Гитлер çуралнă уйăхăн ячĕ. 21. Патвар, кĕрнеклĕ, ... . 23. ... каччă. 24. Митингра сăмах калакан.

**Иртнĕ номерте пичетленнĕ сăмах каçмăш хуравĕсем:**

**Сылтăмалла: 1. Çунат. 3. Кушак. 5. Япала. 8. Çырма. 9. Масар. 10. Урапа. 12. Инçет. 14. Итлес. 15. Хуран. 16. Чăваш.**

**Аялалла: 1. Çимĕç. 2. Тăпра. 3. Калăм. 4. Кĕçĕр. 6. Армак. 7. Юсаççĕ. 10. Ухмах. 11. Автан. 12. Икерчĕ. 13. Тупăш.**


« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ” автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редакторшăн – Е.М.АТАМАНОВА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службиn 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн “Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 30.12.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 7454. Заказ 5055.